Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

4 (8070) № ✻ Юн кун, 2013 ҫулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Раççейре

## Олимп тата Паралимп факелĕсем Шупашкара та ҫитĕҫ

Иртнĕ эрнере Мускавра Олимп тата Паралимп вăййисен факелĕсене пахаланă. 2014 ҫулта Сочире ирттерме палăртнă вăйăсемчен ҫак факелсем пирĕн ҫĕр-шыври 2900 ял-хула витĕр тухмалла. Ҫак вăрăм эстафета маршрутĕнче Шупашкар хули те пур. Факел унта пĕр кунлăх кăçалхи декабрьте ҫитмелле.

Икĕ вăйăн факелĕ те пĕр пекех – вут кайăк (жар птица) тĕкĕ евĕр. Анчах та Олимп вăййисен факелне хĕрлĕ тĕслĕ, Паралимп вăййисен факелне ҫутă кăвак тĕслĕ пулнипе уйăрма пулать.

«Сочи – 2014» йĕркелӳ комитечĕн президенчĕ Д. Чернышенко пĕлтернĕ тăрăх факелсем Ҫурҫĕр полюсĕнче те, Эльбрус тăвĕ ҫинче те, космосра та пулĕҫ. Грециренилсе килнĕ ҫулăма Сочие ҫитерес эстафетăна пурĕ 14 пине яхăн ҫын хутшăнассине, эстафета маршручĕ 65 пин ҫухрăм тăршшĕ пулассине те палăртнă.

Аса илтеретпĕр, Сочири Олимп вăййисем 2014 ҫулхи февралĕн 7–14-мĕшĕсенче, Паралимп вăййисем мартăн 7–16-мĕшĕсенче иртмелле.

Суту-илӳ

## Ырă сăмаха тивĕҫ



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркаш райповĕн Патаккасси лавккинче тăрăшакан Тамара Налимовăна куратăр. Вăл кунти суту-илӳ ĕҫĕнче 1981 ҫултанпа вăй хурать. Унăн тăрăшулăхĕпе пултарулăхне вара туянакансен ырă сăмахĕсем ҫирĕплетеҫҫĕ.*

*– Эпĕ ача чухнех лавккара ĕҫлеме ĕмĕтленеттĕмччĕ, каярах вара ятарлă вĕренӳ курсĕ пĕтертĕм, – каласа парать Тамара Васильевна туянакана таварпа тивĕҫтернĕ май.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Район кунне халалласçĕ

Январĕн 21-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче район кунне паллă тăвассипе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ пулнă. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев (вăл ҫак комитета ертсе пырать) иртгернĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ январĕн 17-мĕшĕнче 24 № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн 2012 ҫулхи социаллă пурнăҫпа экономика аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетессине чаплă ларăва февралĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш академи драма театрĕнче иртгерме палăртнă. Ăна тăван района йĕркеленĕ куна халалласçĕ.

Ларура, тĕпрен илсен, экономика ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетесçĕ, ĕçре мала тухнисене чыслассçĕ.

## Рейд ушкăнĕ ҫула тухрĕ

Ҫак эрнере пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче выльăхчĕрлĕхе хĕл каçарассипе ĕçсем епле пынипе паллашассипе рейд тĕрĕслевĕсем пуçланчĕç. Тĕрĕслевĕн пĕрремĕш кунĕнче район администрацийĕн экономикăпа АПК аталанăвĕн пайĕн тĕп эксперт-специалисчĕ Т. Алексеева ертсе пыракан ушкăн «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхне тата Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Михаил Лукияновăн «Колос» АПФне тата Опрыскьялĕнчи Владимир Павловăн хресчен (фермер) хуçалăхне ҫитсе лару-тăрупа паллашрĕ.

«Ударник» хуçалăхра сĕт суса илесси сахалланни ĕнесен кĕтĕвне чакарнипе ытларах палăрать. Ҫав вăхăтрах Йӳçкассинчи сĕт фермине ĕçлекенсем ҫителĕксĕр: ĕне сăвакансем ҫеç 3 ҫын ҫук. Апат пахалăхĕ начар пулнăран 248 ĕнерен кашнин пуçне талăкри вăтам сăвăм 5,4 килограмм ҫеç тивет. Ĕнесем картишне усăлма тухмаççĕ пĕрех. Ҫав вăхăтрах Вăрманкассинчи сĕт фермине илес пулсан кунта ĕçсем кал-калрах пыраççĕ. Кунти вăтам сăвăм 10,9 килогрампа танлашать. Ферма ĕçченĕсем ĕç укçипе парăм пысăкки, ĕç ҫи-пуçне 2-мĕш ҫул памании пирки пăшăрханаççĕ.

## Юр ҫийĕн ҫӳреме

Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн ҫӳрекен тата ытти машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев, ШĔМĕн Чăваш Республикипе ĕçлекен ГИБДД Управленийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан В. Романов тата Чăваш Республикинчи Гражданла оборонăпа чрезвычайлă лару-тăру патшалăх комитечĕн ертӳçи В. Петров январĕн 15-мĕшĕнче «Снегоход» профилактика операцийĕ иртгерме пĕрлехи хушу кăларнă. Операци январĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 25-мĕшĕччен иртĕ.

Палăртнă тапхăрта ҫирĕплетнĕ ушкăн ĕç коллективĕсенче пулса асăннă операцин тĕллевĕсемпе паллаштарĕ, хуçисем техникăна вăхăтра регистрациленине, вĕсемпе хăрушсăрлăх правилисен требованийĕсене пăхăнса усă курнине тĕрĕслĕ.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Ыр кăмăллăх

## Пулăшу ытлашши пулмĕ

***Ҫĕрпӳ районĕнчи Туçи ялĕнче январĕн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ инкекре 2 ҫын вилнĕ, 18 ҫемье хваттерсĕр юлнă. Газ сирпĕннине пула нумай хваттерлĕ ҫурт юрăхсăра тухнă.***

Ҫавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳçисене, районти граждансене инкекре шар курнисене пулăшма ятарлă счет ҫине укçа-тенкĕ куçарассине йĕркелеме чĕнсе каланă.

Р/с 40701810100001000269

БИК 049706001

ГРКЦ НБ Чувашской Респ. Банка России г. Чебоксары.

Получатель: УФК по Чувашской Республике (Цивильский райфинотдел, МБОУ «Тувсинская СОШ», л/с 20156БП0272), ИНН 2115002865, КПП 211501001.

Назначение платежа: 97400000000000000180, 974810 (добровольные пожертвования (благотворительная помощь) пострадавшим в результате взрыва бытового газа).

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2013 ҫулхи январĕн 14-мĕшĕнчи 10 № йышăнăвĕпе ҫаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– ҫитĕнекен ăрăва пĕлӳ тата воспитани парассинче ăнăçусем тунăшăн Юнкăри вăтам шкулта ОБЖ предметне вĕрентекен **Александр Леонидович СЫТИНА;**

– вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче тухăçлă ĕçленĕшĕн тата общесвăлла ĕçре активлăхпа палăрнăшăн депутатсен Оринин ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне **Михаил Афанасьевич ПРОСОВА.**

Ҫырăнтару – 2013

## Хаклă вулаканăм!

**«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2013 ҫулхи февраль уйăхĕнчен илсе тăма ҫырăнма май пур. Апла пулсан почтальонсемпе тĕл пулма васка.**

**Пилĕк уйăха ҫырăнмалли хак: 170 тенкĕ.**

# Мĕн кĕтет культура учрежденийĕсене?

Комментари

***Хальхи вăхăтра Муркаш районĕнче 56 культурăпа кану учрежденийĕ тата 30 библиотека. Вĕсемпе вырнаçуллă усă курассине социаллă нормативсем пăхса хунă. Нормативсене РФ Правительствин 1996 ҫулхи июлĕн 3-мĕшĕнчи 1063-р № хушăвĕпе ҫирĕплетнĕ. Ҫак нормативсенче ку е вăл ял тăрăхĕн территорийĕнче миçе ҫын пурăннине кура культура учрежденийĕсенче ҫынсем валли лармалли миçе вырăн пулмалли виçене палăртнă.***

***Сĕннĕ ҫак нормативсене кура пирĕн районта культурăпа кану учрежденийĕсенче лармалли 4012 вырăн пулмалла. 2013 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне вара ку кăтарту 10705 вырăнпа танлашать. Ку вăл нормативпа пăхнин – 270,5 проценчĕ чухлĕ.***

**Район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Елена ЧЕРНОВА:**

– Нормативсене кура 2013 – 2014 ҫулсенче районти культура учрежденийĕсене оптимизацилеме пăхнă. Ҫавна туса иртгернĕ чухне муниципаллă культурăпа кану учрежденийĕсен тата библиотекăсен модель стандарчĕсене шута илесçĕ. Ăна район администрацийĕн 2009 ҫулхи январĕн 12-мĕшĕнчи 12 № йышăнăвĕпе ҫирĕплетнĕ.

Модель стандартне кура культурăпа кану учрежденийĕсен тата вĕсен структура подразделенийĕсен ятарлă ҫуртсемпе пӳлĕмсенче вырнаçмалла, ял ҫыннисен вĕсемпе



ирĕклĕ усă курма май пулмалла, телефон ҫыхăнăвĕ кирлĕ. Хăйсен лаптăкне тата мĕнле шайра пулнине кура санитарипе гигиена нормисене, пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене, ĕç хăрушсăрлăхне тивĕçтермелле. Кунпа пĕрлех тивĕçтерекен услугăсем ҫине ялăх витĕм кӳрекен пулăмсем (сывлăш температури ытлашши пысăк е пĕчĕк пулни, сывлăшри нӳрĕк, тусан, тасамарлăх, шăв-шав, вибраци) пуррипе ҫуккине шута илме тивĕç.

Культурăпа кану учрежденийĕсене ятарлă профиль оборудованийĕпе, хальхи аппаратурăпа тата приборсемпе тивĕçтерме сĕнеççĕ. Вĕсен стандарт требованийĕсемпе, техника условийĕсемпе, ытти нормативлă документсемпе килĕшсе тăмалла, ҫынсене пахалăхлă культурăпа кану услугисемпе тивĕçтерме майсем пулмалла. 2013 ҫул хушшинче модель стандарчĕн требованийĕсене тивĕçтермен культурăпа кану учрежденийĕсене оптимизациленĕ май ҫынсене культурăпа кану учрежденийĕсенчи лармалли вырăнсемпе тивĕçтерессине нормативпа пăхнă виçепе шайлаштарма пăхнă.

Официально

**Чувашская Республика**
**Администрация Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**17.01.2013 г. № 23**
**с. Моргауши**
**Об образовании избирательных участков на территории Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии со статьей 19 Федерального закона от 12.06.2002 г. №67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», постановлением Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики от 27.12.2012 г. № 58/382-V, по согласованию с Моргаушской территориальной избирательной комиссией, администрация Моргаушского района постановляет:

1. Образовать на территории Моргаушского района Чувашской Республики 51 избирательный участок (прилагается).
2. Направить настоящее постановление в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики, Моргаушскую территориальную избирательную комиссию.
3. Опубликовать настоящее постановление в средствах массовой информации.
4. Контроль за исполнением настоящего постановления возложить на Тарасову Лилию Юрьевну, заместителя главы администрации района – начальника отдела организационно-кадрового, правового обеспечения и по работе с органами местного самоуправления.

**Глава администрации Моргаушского района**
**Р.Н. ТИМОФЕЕВ.**

**(Список избирательных участков печатается на 4 стр.)**

# Пирĕн яшсем ята ямĕç

**Кĕрхи призыв**

***Çул çитнĕ яш-кĕрĕме çар службине илмелли черетлĕ призыв кампанийĕ вĕçленчĕ. Район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ çак кунсенче Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕпе Александр КОЧУРОВПА тĕл пулнă, хаçат вулакансене интереслентерекен хăш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнă:***

**– Александр Алексеевич, 2012 çулхи призыв кампанийĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май мĕн калама пултаратăр?**

– Тӳрех çавна каласа хăварасшăн. Призыв итогĕсем уйрăм оптимизм туйăмĕ çуратаççĕ. Яшсене çара ăсатассипе Чăваш Республикин çар комиссариачĕ палăртнă задание 110 процент пурнăçлама пултартăмăр. Çар чаçĕсене лайăх хатĕрленĕ, сывлăхлă, пултаруллă яш-кĕрĕме ăсатнă. Çара кайма юрăхлă пулнисенчен 23 проценчĕ аслă пĕлӳ илнĕ, 51 проценчĕ пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳллĕ, призывниксенчен 35 проценчĕ РОСТО (ДОСААФ) автошкулĕсенче вĕренсе водитель специальноçĕн «С», «Д», «Е» категорийĕсене илнĕ.

**– Пирĕн призывниксен сывлăхĕ тивĕçтерет-и? Вăрттăнлăх мар, çара каякансен сывлăхĕ хавшакки пирки калаçнине халĕ тăтăшах илтме пулать.**

– Районĕпе çар службине юрăхлисен шайĕ 66,5 процентпа танлашать. Ку вăл республикăри вăтам кăтартуран пысăкрах. Апла пулин те тухтăрсен те, призывниксен хăйсен те ку тĕлĕшпе малашлăхра ĕçлемелли çук мар. Эпĕ сиенлĕ йăласенчен, чи малтанах пирус туртнинчен хăпасси пирки калатăп. Халĕ вара призывниксен шутне кĕрекен çамрăксенчен чылайăшĕ пирус туртать, туртасса та сахал мар туртать. Уйрăм чирсем енĕпе илес пулсан вара шăмăпа мышцăсен, шалти органсен, чĕрепе сосудсен патологийĕн чирĕсене палăртмалла, нервпа психика чирĕсемпе аптăракансем те пур.

Çара каякансен сывлăхĕ пирки çавна каламалла. Çар служби чирлисем, вăй-хал тĕлĕшпе хавшак çынсем валли мар. Кунта ытларах чухне пысăк нагрузкăсене чăтма тивет. Вĕсене пурте пĕр пек тӳссе ирттереймест.

**– Районта иртернĕ призывниксен кунĕнче эсир, Александр Алексеевич, пирĕн призывниксен сывлăхĕ пирки лайăххах асăнмарăр. Сăлтавĕ пур-им?**

– Пур, сахал та мар. Çакна çар чаçĕсен представителĕсем пирĕн призывниксене тĕрĕсленин итогĕсем те çирĕплетсе параççĕ. Çамрăксенчен хăшĕсем турник çинче алă вăйĕпе 3 хутран ытла туртăнма пултараймаççĕ, 1 километр кросс чупаймаççĕ, ытти йывăртарах нагрузкăсем пирки асăнма та кирлĕ мар. Районта вара физкультурăпа спорта аталантарма питĕ лайăх условисем туса панă: спорт сооруженийĕсем пур, тренажер залĕсем, бассейн. Кашнин хăйĕн ӳтпĕвне çирĕплетме кăмăлпа туртăм пултăр кăна. Çавсем кирлĕ те ĕнтĕ пирĕн яшсене.

Хăш чухне кулăшла та пулса тухать. Призывниксем пыраççĕ. Службăна сывлăш десант çарĕсенче, тинĕс пехотинче, ятарлă çарсенче ирттерессишĕн иккен. Ыйтатăп: «Урайĕнчен алă вăйĕпе миçе хутчен тĕртĕнме пултаратăн, турник çинче миçе хут туртăнайратăн, 1 – 3 километра мĕн вăхăтра чупса тухайратăн?» Кăтартусем вара – нуль. Çарта хальхи вăхăтра хатĕр мар призывниксемпе аппаланса вăхăт ирттерме май çук, уйрăмах элитăллă çар чаçĕсенче. Пĕчĕкренех спортпа туслă пулни кирлĕ. Спорт валли вара вăхăт яланах тупма пулать.

**– Иртнĕ çулхи призыв «географийĕ» пирки мĕн калама пултаратăр? Мĕнле çар чаçĕсенче ирттерĕç пирĕн ентешсем хăйсен службине?**

– Раççей анлă, пур çĕрте те служба тивĕçне пурнăçлакансем пур. Ку вăл – Инçет Хĕвел тухăçпа Байкал крайĕ, Краснодарпа Ставрополь крайĕсем, Мускав регионĕ, Чул хула облаçĕ, Свердловскпа Челябинск облаçĕсем. Ытти вырăнсенче те службăра тăракансем пур. Çар специальноçĕсем енĕпе илес пулсан та расналăх пысăк: мотострелоксем, танкистсем, водительсем, связистсем т. ыт. те.

**– Çар службине каяссинчен пăрăнакансем енĕпе районта лару-тăру мĕнлерех-ха?**

– Кун пеккисем çук мар, çапах та призывниксен пĕтĕмĕшле йышĕнче вĕсем нумай тесе каламастăп. Ытларах чухне кусем вĕсем аслăрах çулхи яшсем, судпа айăпланнисем. Опыт çавна кăтартса парать: çара каяссинчен пăрăнса çӳрекенсенчен 95 процентне яхăн чирлисем, вĕсене призывран хăтарма тивĕçлĕ. Анчах та вĕсем призыв комиссине пыма тăхтаса тăраççĕ. Кун пеккисем тĕлĕшпе право сыхлавĕн органĕсемпе пĕрле ĕçлесе пыма тивет.

**– Йăлана кĕнĕ тăрăх призывниксене, пулас çар çыннисене мĕн чĕнсе калас кăмăл пур?**

– Халăхăн питĕ лайăх каларăшсем пур. Вĕсем ĕмĕрсем тăршшĕпех халăх хăйĕн Тăван çĕр-шывĕн хӳтĕлевçисене мĕнле хакланине уççăн кăтартса параççĕ. Акă вĕсенчен пĕри: «Çĕр çынна çăкăр çитерме, шыв ĕçтерме пултарать, анчах та хăйне хăй хӳтĕлеймест. Ку вăл унăн çăкăрне çиекенсен тата унăн шывне ĕçекенсен çветуй тивĕçĕ». Кунта хушса нимĕн те калаймăн. Тĕнчере пулса иртекен событисем вара çавна çирĕплетсе параççĕ: пирĕн çăкăрпа пирĕн шыва хапсăнакансем сахал мар-ха. Сăмахпа кăна ăнлантарни кунта çителĕксĕр. Тĕнчере вăй яланах хисепре пулнă, халĕ те ку çаплах. Муркаш районĕ призыв ирттерессипе Чăваш Республикинче яланах малтисен ретĕнче шутланнă. Пирĕн ентешсем хăйсен çар тивĕçне Тăван çĕршыв чиккисенче, тинĕсĕсенче яланах чыслăн пурнăçланă, района та, Чăваш Республикине те намăс кăтартман. Малашне те ку çаплах пулĕ.

**Ырă ята тивĕçнисем**

# Кутузовсем – хастар çынсем

Йӳçкасси таврашĕнче Кутузовсене пурте лайăх пĕлеççĕ. Зиновий Михайлович хăй вăхăтĕнче «Ударник» хуçалăхра рабочире те, уй-хир бригадин бригадирĕнче те, агрономра та, колхоз председателĕнче те тăрăшнă. 1971 çулта заочно майпа Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ. 1975 – 1979 çулсенче совхозри пуçламăш парти организацине ертсе пынă. 1981 çултан тытăнса чылай вăхăт çĕр улми вăрлăхĕ çитĕнтерекен лабораторие ертсе пынă. 1990 çулта вăл «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Ĕç ветеранĕ халĕ те алă усса лармасть. Вăл – Турă çӳле çĕкленнин Йӳçкассинчи чиркĕвĕн прихут канашĕн председателĕ. Çак чиркĕве çĕклессишĕн сахал мар тимлерĕ, халĕ те вăй çитнĕ таран тăрăшать.

Унăн мăшăрĕ Вера Григорьевна вара вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Пурăннă пулсан нумаях пулмасть вăл хăйĕн 70 çулхи юбилейне паллă тумаллачĕ. Пуçламăш классен учительници 1964 çулта Матьăкри пуçламăш шкулта ĕçлеме тытăннă. 1979 çулта ăна шкул коллективне ертсе пыма шаннă. 1995 – 1996 çулсенче Матьăкри шкулăча сачĕн директорĕнче тăрăшнă. 1997 çулта ăна «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ят панă.

Хамăн пĕрремĕш учителĕн Вера Григорьевнăн сутă сăнарĕ яланах манăн асăмра. Пуçламăш классенче 3 çул вĕрентрĕ пире. Тараватлă та сăпайлăччĕ, çапах та вĕренӳре çирĕп ыйтатчĕ. Пире пĕлӳ панипе пĕрлех тирпейлĕхе, ĕçченлĕхе вĕрентсе пычĕ. Унпа пĕрле эпир çу кунĕсенче ватăсене пулăшма çӳреттĕмĕр, кивĕ хут, тимĕр-тăмăр пуçтараттăмăр, кĕрхи-çурхи вăхăтра сырма-çатрасенче йывăçтĕмсем лартаттăмăр. Хамăр ĕçлесе илнĕ укçапа мĕн те пулин шкул, класс валли туянаттăмăр. Ĕçре хастаррисене яланах хавхалантарса пыратчĕ.

Вера Григорьевна апатçимĕç пĕçерме ăстаччĕ. Ачисен çуралнă кунĕсенче пире те, кӳршĕ ачисене, пуçтарса хăна тăвачĕ. Мĕн тĕрлĕ кукăль е ытти çимĕç çукчĕ пулĕ сĕтел çинче?! Тĕлĕнеттĕмччĕ: пирĕнпе пĕрле шкулта кун каçрĕ вĕт-ха, кукăльне хăш вăхăтра пĕçерме ĕлкĕрнĕ-ши? Темĕн тĕрлĕ вăйă выляттарса савăнтаратчĕ, çĕнĕ юрăсем вĕрентетчĕ.

Пурнăçра темĕн те пулать. Çынна яланах ăнланма, пулăшма, палăртма тăрăшатчĕ вăл. Çыннăн хуйхи-суйхи унăн хăйĕн та ют пулман. Чĕре ăшши такам валли те çитнĕ.

Обществăлла ĕçрен те айккинче тăман вăл. Чылай çул «Ударник» хуçалăхри хĕрарăмсен канашне ертсе пычĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна «Хĕрарăмсем хушшинчи ĕçшĕн» ылтăн медаль парса чыс тунă. Ку анчах-и. Вырăнта, районта хĕрарăмсен ал ĕçĕсен выставкисене йĕркелессипе те сахал мар тăрăшнă, хăйĕн ал ĕçĕсемпе республикăра иртерекен куравсене те хутшăннă.

Кутузовсем 6 ача пăхса ӳстерсе ура çине тăратнă, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Вĕсем пурте аслă пĕлӳ илнĕ, хăйсен специальноçĕсемпе тĕрлĕ çĕрте вăй хураççĕ.

**А. СЕМЕНОВА, Матьăкри вулавăш ертӳçи.**

# И. Яковлев халалĕсене манмастпăр

**Истори страницисем**

Раççей Президенчĕ В. Путин хыçа юлнă 2012 çула Раççей историйĕн çулталăкĕ тесе палăртнăччĕ, ун пирки хушу та кăларнăччĕ. Ăнсăртран мар. Иртнĕ çул Кутузов ертсе пынипе Наполеон çарне çапса аркатса Мускав çывăхĕнчен каялла хăвалама пуçланăранпа 200 çул çитрĕ. Çавна май çак паллă кунсене халалласа çапăçусем пулнă Бородино çывăхĕнче ятарласа инсценировкăсем те туса ирттерчĕç.

Эпĕ те çамрăклăх çулĕсенче пире, специалистсене, Мускавра пулнă чухне, Бородинона илсе кайнине, Кутузов фельдмаршалăн штаб çуртне кăтартнине аса илтĕм. Йывăç çурт, шалта йывăç сĕтел, Кутузов ларнă йывăç пукан, ытти тисем ларнă вăрăм йывăç тенкел.

Çакăнта Кутузов хăйĕн историллĕ ларăвне ирттернĕ иккен. Унăн пуканĕ çине ларса та пăхас килетчĕ, анчах экскурсовод пире лăплантарчĕ. Çакă маншăн питĕ асра юлмалли самант пулса тăрать, эпĕ уншăн хавхаланмаллипех хавхаланатăп.

Пирĕн чăваш халăхне çутта кăларакан Иван Яковлев ăсчах хăйĕн пире валли хăварнă халалĕнче çапла каланисем пур: «Вырăс халăхĕ – пысăк халăх, ырă кăмăллă, аслă: эсир ăна итлĕр, юратса пурăнăр...». Çак халала чăваш халăхне вĕрентекен 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче пехилленĕ. Вăл тăван чăваш халăхĕн пурнăçне чăннипех те лайăх пĕлнĕ çав.

Вырăс халăхĕн ертӳçисем те чăваш халăхне пĕлмен мар. Эпир Раççейри пысăк юхан шывсем – Атăл тата Сăр таврашĕнче вырнаçнă çĕрте пурăнатпăр вĕт-ха. Кунта пирĕн пĕрремĕш Улатăр, Етĕрне хулисене йĕркеленĕ. Вĕсене ун чухнехи 4-мĕш Иван патша (вăл историре Иван Грозный ятпа паллăрса юлнă) йышăнăвĕпе тунă. Çĕрпӳ хулине те çав çулсенчех йĕркеленĕ. Сĕнтĕрвăрри хулине 17-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Михаил Федорович патша хушăвĕпе йĕркеленĕ. Каярахпа Мария Александровна патша майри ячĕпе Мариинский Посад (посад хула тенине пĕлтерет) теме йышăннă.

Эпир, чăвашсем – Раççей çĕр-шывĕн çыннисем. Иван Яковлевич халалĕсене пирĕн нихăçан та манмалла мар. Эпир вĕсене манмăпăр та.

**Н. ПЕТРОВ.**

Нискасси ялĕ.

# Туянакан кунта ялан йышлă

**Суту-илӳ**



***Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркаш райповĕн ветеринари аптекинче («Детский мир» лавккан пĕрремĕш хутĕнче вырнаçнă) ĕçлекен Ирина Александровна Павловăна куратăр. Ветеринари врачĕнче çирĕм çула яхăн тимлекенскер кунта килекене таварпа кăна мар, сĕнӳ-канашпа та ялан тивĕçтерет. Сутуилĕвĕн çĕнĕ точки ку вырăнта нумай вăхăт ĕçлемест пулин те унăн пĕлĕвне тата пултарулăхне кура туянакан кирек хăçан та йышлă.***

***Палăртма кăмăллă, асăннă аптекăра ветеринари препарачĕсен хакĕ ыттисенчинчен самай пĕчĕк тата вăл питĕ меллĕ вырăнта ĕçлет. Паллах, çакă та илĕртет туянакана.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА. Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Пирĕн пата çыраççĕ**

# Ĕçре те маттур, канура та сатур

Районта Çĕнĕ çул уявне ирттерме йăлана кĕнипе çулсеренех Оринин ял тăрăхĕнче пурăнакансем пуçлаççĕ. Çапла вара вăл раштавăн 26-мĕшĕнче старта тухрĕ. Культура çуртĕнче пухăннисене ветерансен хорĕ саламларĕ. Пирĕн ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи В. Вязов питĕ пуçарулла. Вăл аслă ăру çыннисем патне салам çыравĕсем ячĕ, ырлăх-сывлăх сунчĕ, ытти пирки те манмарĕ.

Асăннă уяв пирĕн патра анлă иртет, пĕр-икĕ кунпа кăна вĕçленмест вăл. 30 –31-мĕшĕсенче татах та пухăнтăмăр Культура çуртне. Вĕççĕрхĕрсĕр юрă-кĕвĕ, савăнăç, чи кĕтни – лотерея выляврĕ. Кашниех «сенкер экран» выляса илме ĕмĕтленет. Мĕн тетĕр эсир? Ăна 1-мĕш класра вĕренекен Н. Павлов **(сăн ӳкерчĕкре)** тивĕçрĕ. Еплерех пысăк савăнăç! Çĕлен кроликпа кăмăлланăран ăна та выляттармасăр хăвармарĕç, унăн хуçи А. Блинова пулчĕ. Çавăн пекех сысна çури, автан, улăм тата ытти парне хăйсен хуçисене шыраса тупрĕ. Ăçтан-ха ун чухлĕ хаклă парне тейĕ хаçат вулакан. «Оринино» хуçалăх ертӳçи Юрий Шишокин питĕ таравать вĕт пирĕн! Ĕçлеме те, халăх кăмăлне тивĕçтерме те пултарать вăл. Çавăнпа та ăнăçу, çирĕп сывлăх, çемьере телей сунатпăр ăна. Ырă



туни ырăпах таврăнтăр!

Çапла вара Çĕнĕ çулăн пĕрремĕш кунĕ те çитрĕ, халĕ кĕçĕн çулхисем пухăнчĕç кунта. 30 ытла ача симĕс чăрăш тавра пухăнса савăнчĕ. Илемлĕ юрă-кĕвĕ шăратма вара Чăваш Республикин композиторсен ассоциацийĕн членĕ В. Александров пулăшрĕ.

Çапах та кунти пĕтĕм ĕçхĕле тивĕçлĕ шайра йĕркелесе ирттерессишĕн информаципе культура центрĕн ертӳçи В. Васильева ырмиканми тăрăшать. Ăна та эпир тав сăмахĕ калатпăр. Ĕçлекен çыннăн кану вăхăтне те йĕркелеме пĕлет вăл.

**Г. АНДРЕЕВА, Оринин ялĕнчи ветерансен канашĕн ертӳçи.**

Саламлатпăр



Чи хаклă çыннăмăра, аннене, асаннене, хунямана, кукамая – Платкасси ялĕнче пурăнакан **Федосия Алексеевна ИВАНОВĂНА** 85 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кунçул, телей сунатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире пурне та парнеленĕшĕн, яланах пире ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕшĕн. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрÿшĕ, кинĕ, 4 мăнукĕ, 6 кĕçĕн мăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, тăванĕсем.**

Январĕн 25-мĕшĕнче Уйкас Хачăк ялĕнче пурăнакан **Маргарита Васильевна КОЛЕСНИКОВА** 55 çул тултарать. Эпир ăна юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Ачусемпе, мăнуксемпе, тăвансемпе тата ĕçтешсемпе яланах савăнса, килĕштерсе пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: Москакассинчи почта уйрăмĕнче ĕçлекенсем.**

Тĕн

# Сăваплă шыва кĕчĕç



Православи тĕнне йышăннисем çирĕп йăлана кĕнĕ тăрăх январĕн 19-мĕшĕнче Иисус Христоса тĕне кĕртнин кунне паллă тăваççĕ. Ку уяв Христос чиркĕвĕн уявĕсенчен чи авалхисенчен пĕри шутланать. Ăна апостолсен вăхăтĕнчех çирĕплетнĕ.

Халăх ăнланăвĕ тата ĕненĕвĕ ÿссе пынăран çак кун Уйкас Янасалти чиркÿре халăх питĕ йышлă пухăнчĕ. Автомашинăсен вĕççĕр-хĕрсĕр юххи кунталла туртăнчĕ. Вакăра шыва кĕнĕ чухне сыхланмалли ĕçсене çирĕп йĕркеленĕ. Çул-йĕре юртан хырса тасатнă. Кунтах полицин участоксенчи уполномоченнăйĕсем тата ответлă ытти ĕçченсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласçĕ.

Чи малтанах çирĕп йăлана кĕнĕ тăрăх вакăри сăваплă та сиплĕ шыва Иоанн иерей кĕрсе тухрĕ. Çавăн пекех ыттисем те харпăр хăй кăмăлне тата ирĕкне кура пĕрин хыççăн тепри сиплĕ шыв еннелле утрĕç. Хăшĕпĕри вара алăсене йĕпетрĕ. Чи пĕлтерĕшли вара кунта – чунри тасалăх тата православи тĕнне ĕненни. Иоанн иерей каланă тăрăх çак кунхи шыв тĕрлĕ амакран, чирчĕртен тата усал-тĕселтен сыхлать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Парăнмасть çулĕсене ветеран

Пирĕн ентеш

Раççей Федерацийĕн писательсен тата журналистсен союзĕсен членĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, журналистсен Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ, Совет телекуравĕпе радиовещанийĕн отличникĕ, «Хĕрлĕ Çăлтăр», Отечественнăй вăрçăн 2 степеньлĕ тата «Хисеп палли» орденсемпе тĕрлĕ медальсен кавалерĕ, Чăваш Республикин Аслă Совечĕн президиумĕн Хисеп грамотипе икĕ хутчен чысланă, «Раççей пресси 300 çулта» паллăна илме тивĕçлĕ пулнă... Çак йĕркесем пурте пĕр çын пурнăçĕнчен. Вăл – Павел Афиногенович Крысин (Микиш Павăлĕ).



Пулас писатель, журналист 1923 çулхи кăрлачăн 25-мĕшĕнче хамăр районти Пăсăрман ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ, Афиноген Никифорович, платниксен бригадипе инçетри ялсемпе хуласенче ĕçлесе çÿренĕ. Виçĕ ывăлпа виçĕ хĕре çитĕнтерессишĕн, ĕçе вĕрентсе тÿрĕ çул çине тăратасси йăлтах амăшĕ – Татьяна Ивановна (вăл та Татьянсен кунĕнче çуралнă) çине тиеннĕ. Хастар та çаврăнăçуллă хĕрарăм кил-çурт тытса тăнипе пĕрлех сухалама та, акма та, вырма та ĕлкĕрнĕ. Пур ĕçре те тирпейлĕхпе палăрнă.

Çамрăк Павлуш та тăван ялĕнчи пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех хастарлăхпа тĕлĕнтернĕ. Виççĕмĕш класа çитсен ăна стена хаçачĕн редакторне суйланă. Пĕрремĕш номер валлиех вăл «Кахал» сатирăллă сăвă çырса хатĕрленĕ. Сăввин геройĕ те çав шкултах вĕреннĕ. Апла пулин те вĕсем «кахалĕ» пурнăçран уйрăличченех юлташлă пулнă.

Оринкинти çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухсан каччă Сĕнтĕрвăрринчи çĕр йĕркелÿпе мелиораци техникумне çул тытнă. Унта вăл типĕ çулсенче тыр-пула искусственнăй майпа шăварса тухăçлă çитĕнтерекенсен ăсталăхне алла илме ăнтăлнă.

Техникумра та маттур каччăна тÿрех асăрханă, комсомолецсен ертÿçине тата комсомол райкомĕн членне суйланă. Тĕрлĕ мероприятисене хутшăнса Павел техникумри, хулари, районти çамрăксен пурнăçĕнчи çĕнĕлĕхсем çинчен çыра-çыра хаçат редакцийĕсене çитернĕ. Пахалăхне кура унăн ĕçĕсене хапăл туса йышăннă, хăйне пĕрре тĕл пуличченех ятарлă корреспондент вырăнне шутлама пуçланă.

Вăрçă пуçлансан, тăшман пирĕн çĕре таптанине, хуласемпе ялсене çунтарнине, паллах, тÿсме пултарайман хастар студент. Фронта каяс ыйтупа вăл хулари çар ĕç комиссариатне темиçе хутчен те çитнĕ. Кашни хутĕнчех ăна: «Эсĕ çамрăк-ха, техникум вĕренсе пĕтер, кирлĕ пулсан хамăрах чĕнетпĕр», – тесе ăсатса янă. 1941 çулта редакцисенче штатлă сотрудниксем питех те çителĕксĕр юлсан, Павел Афиногеновича, тăшманран хÿтĕленмелли сооруженисем тăвас ĕçрен хăтарсан, редакцие ĕçлеме янă. Çапла вăл Сĕнтĕрвăрринче хаçат-журнал ĕçне кÿлĕннĕ. Унтах пулас арăмĕпе, Смоленск облаçĕнчен эвакуаци йĕркипе килсе техникумра вĕренме пуçланă хĕрпе, Пашăпа паллашнă. Анчах та пĕрлешсе çемье чăмăртассине чылай кая хăварма тивнĕ çамрăксен. Хĕр Павел Афиногеновичран та маларах вăрçа кайнă.

Çине тăрсах ыйтнипе 1942 çулхи ака уйăхĕнче каччăн ыйтăвне тивĕçтереççĕ. Алла повестка илсе вун тăххăрти Павел 47 çулти ашшĕпе пĕр кунах фронта тухса каять. Ашшĕ Хĕвел анăçĕнче, ывăлĕ Çурçĕр Кавказра, унăн савнă хĕрĕ Çурçĕр районсенче тăшмана аркатаççĕ, çур Европăна фашистсен пусмăрĕнчен хăтарса çĕнтерÿпе таврăнаççĕ.

Румыние, Чехословакие, Венгрие ирĕке кăларма хутшăннă, вăрçа Китайпа Монголи çĕрĕсенче вĕçленĕ рота комсоргĕ киле таврăнсанах аслă пĕлÿ илме васкать. Хусанти юридици институтĕнчен чи лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă каччăна КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ администрацивлă органсен пайĕн инструкторĕ пулма шанать. Бюро сĕннипех Павел Афиногенович Мускавра партин аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Ун хыççăн республикăри тĕп хаçатсенче редактор çумĕ пулса тăрăшнă, 19 çул хушши Чăваш Республикин телевиденипе радиовещанин патшалăх комитечĕн председателĕ пулнă. Вăл ертсе пынă çулсенче телекуравпа радио ăста кадрсем енĕпе те тĕпрен улшăнаççĕ, çĕнĕ техника хатĕрĕсемпе, ытти пурлăхпа пуянланаççĕ. Çĕнĕ радио çурчĕ тата ытти çуртйĕр ĕçе кĕреççĕ. Комитет председателĕ хăй «Республика пурнăçĕ» ярăм валли 8 киноочерк сценарийĕ çырать. Вĕсене халăх кăмăллăн йышăнать. Çав вăхăтрах Павел Афиногеновичăн кĕнеке хыççăн кĕнеке пичетленсе тухать: 1966 çулта «Тем те пулать пурнăçра», ун хыççăнхи çулсенче «Хăвилосăф», «Хушаматлă алăк», «Пылак ĕмĕтпе пурăнатпăр», «Çук, хăтăлаймастăн, Похлебкин» тата ытти фельетонсен пуххи кун çути курать. Вăрçăра тÿсни-курнисем «Парăнман, çĕнтернĕ» кĕнекере чуна хускатаççĕ. Вĕсене нумай чĕлхене куçарнă.

Пултарулла çын пур çĕрте те пултарулла. Павел Афиногенович общеçтвăлла ĕçсенче те халăх шанăçне чыслăн тÿрре кăларать. Вăл 22 çул пĕр улшăнмасăр халăх депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ пулнă. Темиçе хутчен парти обкомĕн членне суйланă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та хисеплĕ ветеран çичĕ çул «Агитатор блокночĕ» журналăн яваплă секретарĕнче вăй хунă. Мĕн чухлĕ çын ăна хăйĕн вĕрентекенĕ тесе хисеплет.

Сĕнтĕрвăрринче пĕрремĕш хут тĕл пулнă Пашăпа (документсем çинче Парасковья) Павăл 1952 çулта Шупашкарта пĕрлешсе çемье чăмăртанă, 54 çул пĕрле шăкăл-шăкăл пурăнса хĕрпе ывăл çитĕнтернĕ, мăнуксене утьăкка сиктернĕ. Шел, Парасковья Ниловна 2006 çулта çĕре кĕнĕ. Халĕ 90 çул тултаракан Павел Афиногенович ывăлĕн, Владимирăн, çемйипе пурăнать. Ыттисем асăрхаман тÿнтерлĕхе, тĕрĕсмарлăха витĕр курса, геройсене вĕресе тăракан пурнăç аварĕнчен илсе фельетон хыççăн фельетон шăрçалать. Вĕсене республикăри хаçат-журналта пичетлесех тăраççĕ.

**Н. ЗАХАРОВ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: П.А. Крысин.**

***РЕДАКЦИРЕН. Эпир мухтавлă ентеше П.А. Крысина çитсе килекен сумлă юбилейпа саламлатпăр, çирĕп сывлăхпа вăрăм ĕмĕр сунатпăр.***

# Кашни юрри-кĕвви чуна çывăх

Муркашри ветерансен хорĕ – куракансемшĕн чи кăмăлланисенчен пĕри. Юрă-кĕвĕ ăстисене кашни ял тăрăхĕнче пĕлеççĕ тата кĕтеççĕ. Çулсеренех хисеплĕ ветерансем хăйсен пултарулăхне ÿстерсе, репертуара анлăлатса пыраççĕ, çапла майпа куракан кăмăлне туллин тивĕçтереççĕ. Çĕнĕ çула вара вĕсем сумлă ятпа тата хавхаланупа кĕчĕç. Халĕ хор куракан умне «халăх коллективĕ» ятпа тухать. Пысăк хисепе тивĕçни – кашни ветеран тăрăшулăхĕ тата пултарулăхĕ.

Репертуарти кашни юрă – халăх кăмăллани, чуна тивекенни тата чылайчен асра юлаканни. Пĕрре кăна курнипе çырлахас килмест вĕсене. Юрă-кĕвĕ ăстисем сцена çине çĕнĕрен те çĕнĕ программăпа тухаççĕ.Туслă коллектив хисеплĕ, чыслă-сумлă çынсене пĕрлештерет.

Пултарулăхне кура вĕсене тăтăшах район тата ун тулашĕнчи конкурссене, фестивальсене йыхравлаççĕ. Çакăн пек çул çÿревре ыттисен ăсталăхĕпе те паллашма май пур. Хор коллективĕ тивĕçнĕ дипломсен, Хисеп хучĕсен пуххи вара çулсеренех хушăнса пырать. Акă коллектив ветерансен пултарулăхĕн республикăри фестивалĕнчен лауреат пулса таврăнчĕ. Иртнĕ çул вара юрăпа ташă ансамблĕсен республикăри фестиваль конкурсĕнче лауреат ятне тивĕçрĕ. Пултарулла коллектив 2009 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче йĕркеленчĕ. Ун чухне вĕсен пĕрремĕш репетици пулчĕ. Çав тапхăртанпа тăтăшах куракан умĕнче хисеплĕ ветерансем.

Ăстан пуçланнă-ха ку ырă пуçарăва вăя кĕртесси? Районти ветерансен канашĕн ертÿçи М. Виноградова ăна йĕркелес пирки тахçанах ĕмĕтленнĕ. 2008 çул вĕçĕнче ырă сăлтавпа пенсионерсене пĕрле пухнă. Ун пек чухне сăмах çăмхи тĕрлĕ енлĕ чупать, тăста та çитет. Çапла вара шухăш ветерансен хорне йĕркелесси тавра пулнă. Тепĕр тапхăртан Культура çуртне пухăннă май хор йĕркелес калаçу каллех çиеле тухнă. Ырă пуçарăва пурпĕрех вĕçне çитереççĕ хисеплĕ ветерансем, хор йĕркелеççĕ. Ăна Ю. Жуков ертсе пырать. Вăл тăрăшнипе вăтăр икĕ çын пире тĕрлĕ юрă-кĕвĕ парнелет. Туслă коллектив тĕрлĕ ялта пурăнакана пĕрлештерет.

– Пĕр çемьери пекех килĕштеретпĕр эпир. Хăш чухне килеймесен чунра та лăпкă мар. Муркашран аякра пурăнă май районти кашни хыпара пĕлес килет. Пĕр вăхăтра ĕçленĕ çынсемпе чуна уçса калаçма та пулать, – пĕлтерет хăй шухăш-кăмăлне Муркашри Ачасен пултарулăх çуртне вунă çул ытла ертсе пынă Р. Колесникова.

– Эпĕ коллектива ертсе пынă май кашни ветеран тăрăшулăхне туятăп, пултарулăхне куратăп, – паллаштарать коллектив ертÿçи Юрий Жуков.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Культура



**Официально**

**Приложение к постановлению администрации Моргаушского района от 17 января 2013 г. № 23**

**Список избирательных участков, образуемых на территории Моргаушского района Чувашской Республики**

**1. Октябрьский избирательный участок № 525**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание МАУ ДОД «ДЮСШ-ФСК «Сывлах» Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: ул.50 лет Октября, ул.Парковая, ул.Гагарина, ул.Восточная с. Моргауши.
Телефон № 62-3-75.

**2. Чапаевский избирательный участок № 526**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: методический кабинет МБУК «Межпоселенческий культурно-досуговый центр Моргаушского района Чувашской Республики».
Место нахождения помещения для голосования: фойе МБУК «Межпоселенческий культурно-досуговый центр Моргаушского района Чувашской Республики».
Границы избирательного участка: ул.Чапаева, ул.Учительская, ул.Комсомольская Площадь, ул.Коммунальная, ул.Заводская, ул.Речная, ул.Пионерская, ул.Набережная, ул.Советская, ул.Ленина, ул.Красная Площадь, ул.Мира, ул.Южная, ул.Красноармейская, ул.Фронтовая, ул.Колхозная, ул.Новая Колхозная с. Моргауши.
Телефон № 62-6-30.

**3. Шептак-Моргаушский избирательный участок № 527**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: МБОУ «Моргаушская средняя общеобразовательная школа».
Границы избирательного участка: дер.Синьял-Моргауши, дер.Шептаки, дер.-Сюрла-Три, дер.Малиновка.
Телефон № 62-3-66.

**4. Васькинский избирательный участок № 528**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: МБОУ «Сосновская основная общеобразовательная школа».
Границы избирательного участка: с.Александровское, дер.Васькино, дер.Дворики, дер.Ойкас-Абаши, дер.Паймурзино, дер.Сосновка, дер. Юрмекейкино.
Телефон № 61-5-20.

**5. Большесундырский избирательный участок № 529**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание МБУК «Большесундырский информационно–культурный центр» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики
Границы избирательного участка: с.Большой Сундырь, дер.Верхние Олгаши, дер.Кармыши, дер.Новое Шокино, дер.Нижние Олгаши, дер.Кумыркасы.
Телефон № 69-3-65.

**6. Большетатаркасинский избирательный участок № 530**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание МБОУ «Большесундырская средняя общеобразовательная школа».
Границы избирательного участка: дер.Большие Татаркасы, дер.Малые Татаркасы.
Телефон № 69-3-64.

**7. Вомбакасинский избирательный участок № 531**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: здание филиала МБУК «Большесундырский информационно–культурный центр» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Вомбакасинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Большесундырский информационно–культурный центр» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Вомбакасинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Вомбакасы, дер.Токшики.
Телефон № 69-4-95.

**8. Шупосинский избирательный участок № 532**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: читальный зал филиала МБУК «Большесундырский информационно–культурный центр» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Шупосинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал Шупосинского сельского клуба.
Границы избирательного участка: дер.Шупоси, дер.Ямолкино.
Телефон № 69-4-09.

**9. Большекарачкинский избирательный участок № 533**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Большесундырский информационно–культурный центр» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Большекарачкинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Большесундырский информационно–культурный центр» Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Большекарачкинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Ойкасы, дер.Турикасы, с.Большое Карачкино, дер.Адикасы, дер.Мижары, дер.Ешмолай, дер.Оргум.
Телефон № 66-5-18.

**10. Тренькинский избирательный участок № 534**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: фойе МБУК «Тренькинский информационно–культурный центр» Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер.Хундыкасы, дер.Магазейная, дер.Тренькино, дер.Куськино, дер.Тябакасы, с.Ильинка.
Телефон № 66-7-31.

**11. Апчарский избирательный участок № 535**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: методический кабинет филиала МБУК «Тренькинский информационно–культурный центр» Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Апчарский сельский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Тренькинский информационно–культурный центр» Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Апчарский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер. Апчары, дер.Старое Шокино, дер.Хоп-Киберы.
Телефон № 66-8-54.

**12. Шешкарский избирательный участок № 536**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Тренькинский информационно–культурный центр» Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Вурманкасинский сельский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Тренькинский информационно–культурный центр» Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики – Вурманкасинский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Вурманкасы, дер.Ойкасы, дер.Хыркасы, дер.Чебелькасы, дер.Шерек, выселок Васильевка, дер.Мемеккасы.
Телефон № 66-7-98.

**13. Чураккасинский избирательный участок № 537**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание Чураккасинского фельдшерско-акушерского пункта БУ «Моргаушская центральная районная больница» Минздравсоцразвития Чувашии.
Входит дер.Чураккасы.
Телефон № 66-7-10.

**14. Кадикасинский избирательный участок № 538**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Кадикасинский информационно–культурный центр» Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики- Кадикасинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Кадикасинский информационно–культурный центр» Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Входит дер.Кадикасы.
Телефон № 65-6-05.

**15. Калайкасинский избирательный участок № 539**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: помещение музея МБОУ «Калайкасинская средняя общеобразовательная школа им. А.Г. Николаева».
Место нахождения помещения для голосования: фойе 1 этажа МБОУ «Калайкасинская средняя общеобразовательная школа им. А.Г. Николаева».
Границы избирательного участка: дер.Калайкасы, дер.Кораккасы, дер.Карамалькасы, дер.Чурикасы, дер.Яраккасы.
Телефон № 65-3-21.

**16. Шатракасинский избирательный участок № 540**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Кадикасинский информационно–культурный центр» Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Шатракасинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Кадикасинский информационно–культурный центр» Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Шатракасинский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Шатракасы, дер.Сесмеры, дер.Анаткасы. дер.Кюрегаси, дер. Охтикасы.
Телефон № 65-5-36.

**17. Шомиковский избирательный участок № 541**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Кадикасинский информационно–культурный центр» Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Шомиковская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Кадикасинский информационно–культурный центр» Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики – Шомиковский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер. Шомиково.
Телефон № 65-6-08.

**18. Москакасинский избирательный участок № 542**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: читальный зал филиала МБУК «Москакасинский информационно–культурный центр» Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Москакасинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Москакасинский информационно–культурный центр» Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер.Ахманеи, дер.Москакасы, дер.Сидуккасы дер.Лесные Хачики.
Телефон № 66-2-39.

**19. Рыкакасинский избирательный участок № 543**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Москакасинский информационно–культурный центр» Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Рыкакасинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал Филиал МБУК «Москакасинский информационно–культурный центр» Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики-Рыкакасинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Рыкакасы, дер.Калмыково, дер.Сюлеменькасы, дер.Эхветкасы.
Телефон № 62-0-28.

**20. Хачкинский избирательный участок № 544**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: библиотека МБОУ «Москакасинская средняя общеобразовательная школа».
Место нахождения помещения для голосования: спортивный зал МБОУ «Москакасинская средняя общеобразовательная школа».
Границы избирательного участка: дер.Полевые Хачики, дер.Нижние Хачики, дер.Сергеевка, дер.Максикасы, дер.Пожедановка, дер.Ивановка, дер.Мурзаково.
Телефон № 66-2-05.

**21 . Орининский избирательный участок № 545**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: дискотечный зал МБУК «Орининский информационно–культурный центр» Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Орининский информационно–культурный центр» Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер.Ландыши, дер.Падаккасы, с.Оринино, дер.Лапкасы, дер.Синьял-Оринино, дер.Чамыши.
Телефон № 60-0-19.

**22. Адабайский избирательный участок № 546**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Орининский информационно–культурный центр» Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Адабайская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиал МБУК «Орининский информационно–культурный центр» Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Адабайский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Адабай, дер.Семенькасы, дер.Сендимир.
Телефон № 60-4-58.

**23. Басурманский избирательный участок № 547**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание Басурманского фельдшерско-акушерского пункта БУ «Моргаушская центральная районная больница» Минздравсоцразвития Чувашии.
Границы избирательного участка: дер.Басурманы, дер.Вурманкасы, дер.Пикикасы.
Телефон № 60-1-72.

**24. Молгачкасинский избирательный участок № 548**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Орининский информационно–культурный центр» Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики-Молгачкасинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Орининский информационно–культурный центр» Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Молгачкасинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Молгачкасы, дер.Тереси.
Телефон № 60-3-58.

**25. Сятракасинский избирательный участок № 549**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Кашмашский информационно–культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Сятракасинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: фойе 1 этажа МБОУ «Сятракасинская средняя общеобразовательная школа».
Границы избирательного участка: дер.Сятракасы, дер.Синьял-Хоракасы.
Телефон № 68-2-18.

**26. Кашмашский избирательный участок № 550**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: фойе 2 этажа МБУК «Кашмашский информационно–культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер.Кашмаши, выселок Хоракасы.
Телефон № 68-2-58.

**27. Оточевский избирательный участок № 551**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Кашмашский информационно–культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Оточевская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Кашмашский информационно–культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Оточевский сельский клуб.
Границы избирательного участка: с.Оточево, дер.Торинкасы, дер.Ирхкасы, дер.Шупоси.
Телефон № 68-7-16.

**28. Ятманкинский избирательный участок № 552**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Кашмашский информационно–культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Ятманкинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Кашмашский информационно–культурный центр» Сятракасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Ятманкинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Ятманкино, дер.Юдеркасы, дер.Синьял-Оточево.
Телефон № 68-7-43

**29. Тораевский избирательный участок № 553**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Тораевский информационно–культурный центр» Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Тораевская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: кабинет директора МБУК «Тораевский информационно–культурный центр» Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: с.Тораево, дер.Сюлово, дер.Ойкасы, дер-.Сяран-Сирмы.
Телефон № 64-3-52.

**30. Большетокшикский избирательный участок № 554**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: методический кабинет филиала МБУК «Тораевский информационно–культурный центр» Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Токшикский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Тораевский информационно–культурный центр» Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики-Токшикский сельский Дом культуры.
Входит дер. Большие Токшики, дер.Сюткюль, дер.Сене-Хресчен.
Телефон № 64-2-29.

**31. Анаткасинский избирательный участок № 555**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Тораевский информационно–культурный центр» Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Анаткасинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Тораевский информационно–культурный центр» Тораевского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Анаткасинский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Анаткасы, дер.Сятракасы, дер.Демкино.
Телефон № 64-2-87.

**32. Тойшевский избирательный участок № 556**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: здание Тойшевского фельдшерско-акушерского пункта БУ «Моргаушская центральная районная больница» Минздравсоцразвития Чувашии.
Границы избирательного участка: дер. Тойшево.
Телефон № 64-2-52.

**33. Тойгильдинский избирательный участок № 557**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: методический кабинет МБУК «Тойгильдинский информационно–культурный центр» Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Тойгильдинский информационно–культурный центр» Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: с.Тойгильдино, дер.Шептаки, дер.Ижелькасы.
Телефон № 64-5-44.

**34. Хорнойский избирательный участок № 558**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет администратора филиала МБУК «Тойгильдинский информационно–культурный центр» Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Хорнойский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Тойгильдинский информационно–культурный центр» Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Хорнойский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер. Хорной.
Телефон № 62-4-71.

**35. Чуманкасинский избирательный участок № 559**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: МБОУ «Чуманкасинская средняя общеобразовательная школа».
Границы избирательного участка: дер.Одаркино, с.Чуманкасы, дер.Шербаши, дер.Карманкасы, дер.Ягаткино.
Телефон № 61-2-66

**36. Иседеркинский избирательный участок № 560**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Чуманкасинский информационно–культурный центр» Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Иседеркинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Чуманкасинский информационно–культурный центр» Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Изедеркинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Изедеркино, дер.Соляной.
Телефон № 61-3-49.

**37. Шатьмапосинский избирательный участок № 561**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Шатьмапосинский информационно–культурный центр» Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Шатьмапосинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Шатьмапосинский информационно–культурный центр» Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер. Шатьмапоси, дер. Кадыкой, дер. Карманкасы, дер.Торханы, дер. Сарчаки.
Телефон № 68-5-85.

**38. Тиушский избирательный участок № 562**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: филиал МБУК «Шатьмапосинский информационно–культурный центр» Шатьмапосинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Тиушская сельская библиотека.
Границы избирательного участка: дер. Тиуши, дер. Авданкасы, дер. Обрыскино.
Телефон № 68-5-17.

**39. Юнгинский избирательный участок № 563**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Юнгинский информационно–культурный центр» Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Юнгинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: фойе МБУК «Юнгинский информационно–культурный центр» Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: с.Юнга, выселок Коминтерн.
Телефон № 69-7-40.

**40. Кубасинский избирательный участок № 564**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет администратора филиала МБУК «Юнгинский информационно–культурный центр» Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Кубасинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Юнгинский информационно–культурный центр» Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Кубасинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер.Кубасы.
Телефон № 69-7-01.

**41. Сярмыськасинский избирательный участок № 565**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: методический кабинет филиала МБУК «Юнгинский информационно–культурный центр» Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Сярмыськасинский сельский клуб.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал филиала МБУК «Юнгинский информационно–культурный центр» Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Сярмыськасинский сельский клуб.
Границы избирательного участка: дер. Сярмыськасы, выс. Канаш.
Телефон 69-8-05.

**42. Юнгапосинский избирательный участок № 566**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет начальника ПТО ЗАО "МСО "Моргаушская"
Место нахождения помещения для голосования: кабинет начальника базы ЗАО "МСО "Моргаушская".
Границы избирательного участка: дер. Юнгапоси, дер. Елкино, выс. Первое Мая.
Телефон 69-7-23.

**43. Юськасинский избирательный участок № 567**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет директора МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Место нахождения помещения для голосования: танцевальный зал МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: с.Юськасы, дер.Нюреть, дер.Падаккасы, дер.Ильбеши, дер.Актай.
Телефон № 60-5-72.

**44. Вурманкасинский избирательный участок № 568**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Вурманкасинский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: фойе филиала МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Вурманкасинский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Вурманкасы.
Телефон № 60-6-95.

**45. Мадикский избирательный участок № 569**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет администратора филиала МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Мадикский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: фойе филиала МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Мадикский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Старые Мадики, дер.Новые Мадики, дер.Сюмерткасы, дер.Рогож.
Телефон № 60-8-39.

**46. Нижнепанклейский избирательный участок № 570**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Панклейский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: фойе филиала МБУК «Юськасинский информационно-культурный центр» Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Панклейский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Верхние Панклеи, дер.Нижние Панклеи, дер.Хорнкасы.
Телефон № 60-9-59.

**47. Ярабайкасинский избирательный участок № 571**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: филиал МБУК «Ярабайкасинский информационно–культурный центр» Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Ярабайкасинская сельская библиотека.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Ярабайкасинский информационно–культурный центр» Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер.Ярабайкасы, дер. Идагачкасы, дер.Ермаково, дер.Елачкасы, дер.Милюдакасы.
Телефон № 67-2-33.

**48. Сыбайкасинский избирательный участок № 572**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Ярабайкасинский информационно–культурный центр» Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Сыбайкасинский сельский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: фойе филиала МБУК «Ярабайкасинский информационно–культурный центр» Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Сыбайкасинский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: дер.Верхний Томлай, дер.Нижний Томлай, дер.Новый Томлай, дер.Сыбайкасы, дер.Иштереки, дер.Вускасы.
Телефон № 67-3-29.

**49. Акрамовский избирательный участок № 573**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет заведующего филиалом МБУК «Ярабайкасинский информационно–культурный центр» Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Акрамовский сельский Дом культуры.
Место нахождения помещения для голосования: фойе филиала МБУК «Ярабайкасинский информационно–культурный центр» Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Акрамовский сельский Дом культуры.
Границы избирательного участка: с.Акрамово, дер.Костеряки, дер.Вурмой, дер.Шоркасы, дер.Синьял-Акрамово.
Телефон № 67-5-33.

**50. Нискасинский избирательный участок № 574**
Место нахождения участковой избирательной комиссии: кабинет №3 администрации Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Место нахождения помещения для голосования: зрительный зал МБУК «Ярославский информационно–культурный центр» Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.
Границы избирательного участка: дер. Нискасы, дер. Ярославка, дер. Новое Чемеево, дер.Елхово.
Телефон № 64-7-33.

**51. Чемеевский избирательный участок № 575**
Место нахождения участковой избирательной комиссии и помещения для голосования: филиал МБУК «Ярославский информационно–культурный центр» Ярославского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики - Чемеевский сельский клуб.
Границы избирательного участка: с.Чемеево, дер.Елжихово, дер.Ихонькино, дер.Лебедкино, дер.Хозанчино.
Телефон № 64-7-32.

# Тĕнчипе паллă спортсменсем пĕрремĕш утăмсене кунта тунă

В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулне йĕркеленĕренпе – 40 çул



***Çыннăн пурнăçра ĕççĕр пуçне пушă вăхăта усăллă ирттерме кăмăлланă ĕç пулсан ăна нихăçан та кичем мар. Пушă вăхăта иртерессине спортпа çыхăнтарни вара пур енчен те лайăх: кăмăла тивĕçтерме те, сывлăха çирĕплетме те. Çакна ачаран хăнăхмалла кăна.***

***Пирĕн районта вара çакна валли майсем çителĕклĕ темелле. Акă В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче кăна çулсеренех 350 ача спорт ăсталăхне туптать. Шкула йĕркеленĕренпе кăçал 40 çул çитрĕ. Çак хушăра халĕ çĕр-шывра кăна мар, тĕнчипех палăрнă чылай спортсмена пĕрремĕш утăмсем тума шăпах çак шкул пулăшнă. Шкулăн историйĕпе кăсăкланса паянхи калаçăва ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен В. Егорова ячĕллĕ Муркашри спорт шкулĕн ертӳçине, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне, РФ физкультурăпа спорт отличникне Александр СИДЮШКИНА чĕнтĕмĕр.***

**– Александр Александрович, спорт шкулĕн историйĕпе кăшт паллаштарсамăр.**

– Ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен В. Егорова ячĕллĕ Муркашри спорт шкулĕ хăйĕн истори страницисене 1973 çултанпа çырма тытăннă. Ун чухнехи «Урожай» спорт пĕрлешĕвĕн тĕп канашĕн январĕн 2-мĕшĕнчи 25 номерлĕ йышăнăвĕпе çак шкула туса хума çирĕплетнĕ. Çапла вара малтанах чылай вăхăт хушши пирĕн спорт шкулĕ «Урожай» спорт пĕрлешĕвĕн районти канашĕ çумĕнчи шкул шутланнă. Вăхăт иртнĕçемĕн, 1993 çулта, шкула республикăри Физкультурăпа спорт патшалăх комитечĕн балансĕ çине куçарнă. Паян эпир – Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министерствин аллинче.

**– В. Егорова ятне шкул хăçан тивĕçрĕ-ха?**

– Олимп чемпионки Валентина Егорова ячĕпе спорт шкулĕ 1996 çултанпа хисепленсе тăма пуçларĕ. Хыççăн тĕрлĕ вăхăтра шкулăн ячĕ те хăйĕн пĕлтерĕшне палăртса улшăнкаларĕ, анчах та В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕ тени – яланлăхах.

**– Сирĕн спорт шкулĕнчен чылай паллă спортсмен тухнă. Нумайăшĕ паян та пысăк спортра. Çак пĕлтерĕшлĕ кăтартăва çулсеренех тытса пыма мĕнле тĕллевсене тĕпе хурса ĕçлесе пыратăр?**

– Тĕллевĕсем пирĕн, паллах, спортпа çыхăннă. Эпир пысăк ăсталăхлă спортсменсене хатĕрлессипе, спортăн тĕрлĕ енĕпе республикăн пĕрлештернĕ командисене çĕнĕ ятсем кĕртессипе тăрăшатпăр. Çавăнпа та хамăрăн спорт шкулне те çирĕп кăмăллă, тĕллевлĕ ачасене илме тăрăшатпăр. Районти шкулсене массăллă спорта явăçтарассипе, районти, республикăри массăллă спорт ăмăртăвĕсене йĕркелессипе те тимлетпĕр. Шкулăн администраци ĕçченĕсем те, тренерсем те тăтăшах хăйсен квалификацине ӳстерессĕ, кунсăр малалла кайма çук. Икĕ тренер аслă категориллĕ, пиллĕкĕшĕ – пĕрремĕш категориллĕ, пĕри – иккĕмĕш категориллĕ ĕçченсем. Тренерсемпе преподавательсем хушшинче ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕсем, ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, РФ спорт отличникĕ те пур.

**– Тренерсем пирки сăмах пуçарнăран. Питĕ пултаруллă тренерсем ĕçлеççĕ спорт шкулĕнче. Сирĕн воспитанниксем пысăк спортра пулни çапла çирĕппĕнех, пĕр иккĕленӳсĕр калама май парать.**

– Ачасемпе тата çамрăксемпе пултаруллă, ĕçе чунпа парăннă, пысăк опытлă тата ăсталăхлă тренерсем ĕçлеççĕ. ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕсем Вячеслав Киселев тата Аверкий Васильев çăмăл атлетика енĕпе ĕçлеççĕ. ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ Иван Воробьев велоспорт-маунтинбайк енĕпе тимлет. Владимир Кузьмин, Игорь Смирнов, Николай Скворцов тренер-преподавательсем ачасене йĕлтĕр спортне çул уçма пулăшаççĕ. Родион Григорьевпа Сергей Васильев тренер-преподавательсем çăмăл атлетикăна суйласа илнисемпе ĕçлеççĕ. Кашни тренер хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăвать, кунсăр пысăк результатсем пулмĕччĕç.

Ума лартнă тĕллевсене пурнăçласинче спорт шкулĕн инструктор-методисчĕн Михаил Сидоровăн, директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе тимлекен çумĕн Александр Петровăн тӳпи те палăрмăллă. Паллах, ĕçе йĕркелессинче Ольга Сидюшкина тĕп бухгалтерăн ĕçĕ те пĕлтерĕшлĕ.

**– Тĕллевсене пурнăçлассинче пурлăх бази те хăйĕн вырăнне йышăнать. Александр Александрович, ку тĕлĕшпе мĕн калама пултаратăр?**

– Паллах, спорт аталанăвĕнче пурлăх бази те пысăк вырăн йышăнать. Çакна валли пирĕн комплекслă спорт площадки те, йĕлтĕр бази те пур. Ачасене ăмăртăва илсе çӳреме – микроавтобус, йĕлтĕр çулне йĕркере тытса тăма – снегоход.

**– Çапах та спорт шкулĕн ячĕ-сумĕ, пĕлтерĕшĕ вăл çул уçса панă спортсменсенче ытларах тени йăнăш пулмасть пулĕ.**

– Пирĕн патра пĕрремĕш утăм туса малашне те хăйсен пурнăçне спортпа çыхăнтарнисем чылай. Хальхи вăхăтра та нумайăшĕ спортра. Хăвăрт утассипе тĕнче класлă Раççей спорт мастарĕ, 20 çухрăм хăвăрт утассипе тĕнче рекордсменки тата ытти ăмăртусен çĕнтерӳçипе призерĕ Вера Соколова **(иккĕмĕш сăнӳкерчĕкре сулахайри)**, биатлон енĕпе Раççей тава тивĕçлĕ спорт мастарĕ, Европа тата тĕнче чемпионĕ Татьяна Моисеева, хăвăрт утассипе тĕнче класлă Раççей спорт мастарĕ Петр Трофимов, хăвăрт утассипе тĕнче класлă Раççей спорт мастарĕ, Пĕтĕм тĕнчери универсиада призерĕ Нина Охотникова **(сăн ӳкерчĕкре сылтăмри)**, хăвăрт утассипе тĕнче класлă Раççей спорт мастарĕ Александр Ягрунькин – паян тĕнчипе паллă. Раççей спорт мастарĕсем Василий Трофимов, Сергей Васильев, Павел Охотников, Елена Елизарова, Ирина Портнова, Надежда Антонова, Раççей спорт мастарĕн кандидачĕсем Людмила Филиппова, Вера Васильева, Петр Семенов, Марина Семенова спортăн тĕрлĕ енĕпе палăрса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче хăвăрт утакансем те, йĕлтĕрçĕсем те, велоспорта суйласа илнисем те пур.



Пĕтĕмĕшле вара паянхи кун тĕлне пирĕн 11 воспитанник – Раççейĕн пĕрлештернĕ командисенче.

**– Çакă спорт шкулĕ ума лартнă тĕллевсене пурнăçланине çирĕплетет те.**

– Тăрăшатпăр. Хальхи вăхăтра акă спорт шкулĕн 20 вĕренӳ уйрăмĕнче 350 воспитанник хăйĕн ăсталăхне туптать. Çулсеренех пирĕн воспитанниксем тĕрлĕ шайри ăмăртусенче çĕнтереççĕ, малти вырăнсене тухаççĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш çур çулĕнче кăна республикăри 63, регионсем хушшинчи 4, Пĕтĕм Раççейри 26 тата тĕнче шайĕнчи 1 ăмăртура пирĕн воспитанниксем çĕнтерӳçĕсен пьедесталĕн картлашкисем çине хăпарма пултарчĕç. Малтанхи çул пĕтĕмлетĕвĕпе массăллă разряд спортсменĕсене 170, 1 разрядлă спортсменсене 16, кунсăр пуçне тата спорт мастарĕн 2 кандидатне, 2 спорт мастарĕне хатĕрленĕ. Çапла малаллах ăнтăлатпăр.

**– Спортра туслисем пурнăçра та яланах çирĕп тĕллевлĕ, ĕçре те тăрăшуллисен йышĕнче. Хăй вăхăтĕнче сирĕн спорт шкулĕнче спортпа туслашнисем паян ответлă должноçсем йышăнни те кăмăла хăпартать пулĕ?**

– Ку тĕрĕсех. Пирĕн шкулăн воспитанникĕ, СССР спорт мастарĕ Надежда Юркина та, Любовь Плечова та хăй вăхăтĕнче СССР тата Раççей ăмăртăвĕсен призерĕсем пулма тивĕçнĕ, СССР-ăн çамрăксен пĕр-лештернĕ командинче пулнă. Паян акă Л. Плечова Федераллă миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхĕнче тăрăшать. Йĕлтĕр спортĕнче ăсталăха туптанă Эдуард Волков федераллă судьяра вăй хурать, Алексей Воробьев Муркашри сĕт заводне ертсе пырать. Ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК директорĕ Александр Куликов та пирĕн шкулăн воспитанникĕ пулнă. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕпе муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳçи В. Ананьев та, республикăри Шалти ĕçсен министерствин уголовлă шырав пайĕн аслă оперуполномоченнăйĕ, полици подполковникĕ В. Васильев та пирĕн спорт шкулĕнче хăйсен вăй-халне те, кăмăл çирĕплĕхне те туптанă. Çапла вара паянхи çамрăк спортсменсен тĕслĕх илмелли çынсем хамăр районта та çителĕклĕ. Спорта юратмалла, унпа туслашмалла кăна.

**– Тавах интереслĕ калаçушăн.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Экологи

## 2013 – Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин кăçал çĕр-шывра Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк иртесси çинчен пĕлтерчĕ. Çавна май регионсене тавралăха хӳтĕлемелли ĕçсем пуçарса яма сĕннĕ. Ку тĕлĕшпе Чăваш Республикинче ятарлă комисси йĕркеленĕ те ĕнтĕ. Раççей Правительстви çирĕплетнĕ планпа пысăк пĕлтерĕшлĕ 81 мероприяти кĕртнĕ.

Чăваш Енре мĕн тума пулать-ха? Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви, Пулăççемпе сунарçăсен патшалăх служби, Роспироднадзор управленийĕ, Çут çанталăка хӳтĕлекен Шупашкар прокуратури пуçарнипе наукăпрактика конференцийĕсем, пуху-канашлусем йĕркелесен тем пекехчĕ. Экологи ыйтăвне сивĕч лартма вăхăт çитнĕ.

Республикăра 2356 пысăк тата пĕчĕк юхан шыв. Вĕсем 8650 километра тăсăлаççĕ. 754 кӳлĕ, çĕр-çĕр пĕве. Кашниех епле те пулин тимлĕх, хӳтлĕх кĕтет.

**Хамăр инф.**

# Ача мĕнле аталанасси хăвăртан килет

Ашшĕ-амăшĕсене пĕлме

Ачана пур енлĕ воспитани парасси çемьере ача çуралсанах пуçланать. Çавăнтанах – ачан тĕрĕс калаçăвĕ те. Ача сывăх çынсемпе хутшăнса калаçма вĕренет. Сăмахсене тĕрĕс, сасăсене уçă калас йĕрке хăй тĕллĕнех пулса пырать тени тĕрĕс мар. Ача мĕн пĕчĕкрен тĕрĕс те илемлĕ калаçнине илтсе ӳссен илемлĕ те уçăмлă калаçма вĕренет. Уйрăмах ача виçĕ çула çитичченех вăйлă аталанать, пурне те ас тума пултарать.

Çуралсан малтанхи кунсенчех ача амăшĕ аллине хăвăрт хăнăхать, амăшĕ унпа мĕнле сасăпа калаçнине ăнланать. Ют çын сассине те уйăрать. Тĕттĕмпе çутта пĕлет. Уйрăмах аслисем унпа мĕнле интонаципе калаçнине туять. Ахальтен мар мĕн авалтанах ачана лăплантарма сăпка юррисем юрланă. Вĕсем ачана канлĕх кӳнĕ. Çавăнпа та логопедсем сĕннĕ тăрăх ачана лăпкă сасăпа, ăшă сăмахсемпе ачашласа сывăратмалла. Сăпка юрри е халăх юрри – сăмахĕсене уçăмлă каламалла. Хальхи çамрăк ашшĕ-амăшĕсем ача сывăрнă чухне магнитофонпа музыка яраççĕ. Вĕсен шучĕпе ача сасăпа сывăрма хăнăхать. Ку, паллах, тĕрĕс мар.

Ачапа çуралнă хыççăнах калаçăр, сăмаха тĕрĕс те уççăн калăр, сасă лăпкă пултăр. Пĕчĕк пепке сăмахсен пĕлтерĕшне пĕлмест пулин те калаçаканăн лăпкă сассине туять, хăйне юратнине ăнланать. Ачана шыва кĕртнĕ чухне те, кĕпине улăштарнă чухне те, апат çитернĕ чухне те яланах васкамасăр ачашшăн калаçмалла. Ача сирĕн сăнпите пăхса, тута хусканăвне курса кăмăлăра ăнланать. Уйрăмах о, и, е сасăсене уççăн калама тăрăшмалла, мĕншĕн тесен кайран ача вĕсене каланă чухне у, э сасăсемпе улăштарать. Çавăнпах спорт шкула кайсан та о, и, у, е (э) сасăллă сăмахсене сыпнă чухне йăнăшсем тăвать. Акă мĕншĕн пĕчĕкренех тĕрĕс калаçма вĕрентни кирлĕ те.

Мĕн çуралнăранпах ача мĕнле аталанса пырать, мĕнле сасăсем кăларать, хăçан упаленме, калаçма пуçлать, лĕпки хăçан питĕрĕнет тата ыт. те çырса пыни питĕ кирлĕ. Ача аталанăвĕнче çитменлĕх палăрсан çаксем тухтăрсемшĕн питĕ кирлĕ кăтартусем пулаççĕ.

Мĕн пĕчĕкренех ачан курас е илтес тимлĕхне аталантарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ача хăйне кăтартнă сасă паракан тетте хыççăн куçпа йĕрлесе пытăр. 3–4 çулхи ачасене ӳкерчĕклĕ лото е пазлсемпе выляни курав тимлĕхне аталантарма пулăшать. Пĕрисем çак вăйăсемпе нумай вăхăт лараймаççĕ, тимлĕх çукрах, итлеме те, сăнама та пĕлеймеççĕ, урăх вăйă выляма пуçлаççĕ. Теприсем вара питĕ лăпкă, васкамаççĕ, тӳрех ăнланса илеймеççĕ. Çапла вара çак çитменлĕхсем шкулта та палăраççĕ. Пĕрисен урокра тимлĕх çук. Учитель каланине йĕрлесе пыраймаççĕ, итлесе пĕтермесĕрех ĕçе тытăнаççĕ, вĕçне çитерейменĕ. Учителĕн ирĕксĕрех вĕсене асăрхаттарма тивет. Ачан вĕренес кăмăлĕ пусăрăнать, вĕренӳре ĕлкĕреймн пулать.

**О. ЕРШОВА,**

**«Путене» ача-пăча садĕнчи психолог, логопед.**

**(Малалли пулать).**



# Сăвă-калав çырма кăмăллакансен страници



Калав

## САРИВАН

Пичĕ-куçĕ тикĕт пек хура пулнăран ăна ялта ... Сариван тесе чĕннĕ. Кулăшла, паллах. Хăй сарă та мар, Йăван та мар. Анчах – Сариван. Çыпçăннă çак сăмах, нимĕнпе те хăйпăтса ÿкереймĕн ăна. Вăл, чăн та, тикĕт пек хура: çÿçĕ тĕттĕм, тĕксĕм те мар – хуп-хура. Икĕ вĕтĕ куç. Вĕсем шап-шурă. Ытти вара – хуп-хура. Чăваш çынниех, таçтан çапла çуралнă, мĕскĕн.

Сариван ялта чи чипер каччă шутланнă. Кам пĕлет, хитрелĕхе темпе-çке виçмелле? Анчах та хĕрарăмсен – хăйсен виçи. Ялти хĕрарăмсем каçса кайсах юратнă Саривана. Çынни тикĕт пек, чикан пек, анчах – юратнă. Ятне те чипер ят панă – Сариван.

Сариван вара хĕрарăмсен юратăвĕпе эх! питĕ те шеп усă курма пĕлнĕ. Пĕрине тепринпе улăштарсах тăнă. Çук, вăрттăн мар, пĕтĕм ял пĕлмелле, çын çинче улăштарнă. Миçе хут авланнине ялйыш мар, хăй те шутласа кăларайман пулĕ. Авланнă та авланнă Сариван. Ăна тата кашниех каçарнă. Тепĕр çын пулсан çĕр тĕпне анса каймалла намăса пула. Сариван мухтаннă кăна. Çынсем те мухтанă: вăт пултарать, вăт маттур!

Авланас умĕн Сариван хĕрарăм килне евчĕ янă. Евчи – ку ĕçе пархатарлă тума вĕренсе çитнĕ пахча хыçĕнчи Лисук.

Юлашки арăм килтен тухса кайни çур уйăх çитнĕ çĕре вырăн тупаймасăр кускалакан Сариван Лисука чĕнсе илнĕ.

– Хурăнлăхра тăлăх хĕрарăм Сантăркка пурăнать теççĕ, – тенĕ хусаха юлнă арçын. – Çавна çураçас шухăш пур. Кайса калаççан пăсмĕччĕ те...

– Эпĕ – ыранах, – тенĕ Лисук. – Четвĕрт сăмакунне хальхинче камран тупас-ши?

– Кăвак шĕвек ялта сахал-им, тупнă пуça ватмалли... Атя, кайса кил. Мĕн каламаллине хăв чухлатăн. Ăш вĕресе тухать, пĕр кун пĕр ĕмĕр тамăкра çуннă пек туйăнать...

Тухса утнă вара Лисук çак каçах кÿршĕ Хурăнлăха. Сантăрккана шыраса тупнă та чĕвĕл чĕлхипе кĕвĕ шăрантарнă:

– Сариван тесе чĕнеççĕ. Питĕ шукăль, питĕ шеп арçын. Упăшкам пулмасан хам та пĕр турткаланмасăрах ун минтерĕ çине пуçа хурса çывăрмалла...

– Апла пулсан тепĕр эрнинче хăй хăтана килтĕр. Çыннине курмасăрах качча каяс çук. Сариван тетĕн те, сарă пулĕ ĕнтĕ вăл, çÿçĕсем кăтраланса выртаççĕ пуль. Ах! Юрататăп эпĕ саррисене! Пирĕн ялта лаша урапи пек тĕксĕм çынсем кăна та, саррине курсан сар хĕвел пек, сар çу пек ирĕлес килет...

– Юрĕ, ара, юрĕ, халĕ каланă пек пултăр, – тенĕ те Лисук, каялла тăван яла тухса шăваннă.

Чăн та, хĕрарăмăн ăсĕ кĕскерех çав. Сантăркканнисĕр пуçне. Илтетчĕç те Сариван ятне, тепĕр куннех хапха умне çитсе тăратчĕç. Сарă арçынна курма ĕмĕтленетчĕç. Тикĕт тĕслĕ Саривана курсан каялла çаврăнма тăратчĕç, кăшт шухăшласа тăнă хыççăн унăн килне ярса пусатчĕç. Пурăнкалатчĕç те пĕр яхăн, хутаççисене пухса тăван яла тухса утатчĕç. Пĕри те хăтана чĕнсе курман. Сантăрккасăр пуçне...

Лисук, çав каçах Сариван патне хашкаса çитнĕскер, каланă:

– Çитес эрнере Сантăркка патне хăтана кайма тивет. Унсăрăн качча килместĕп, тет.

– Мĕс-ке-ер? - тĕлĕннĕ Сариван. – Вăтăр авланса та виçĕ хут хăтара пулман эпĕ!

– Пулнă-и, пулман-и, авланасах тетĕн пулсан, каймах тивет...

Сариван нумайччен кĕтеселле пăхса ларнă. "Кирлĕ мана Сантăркка, тата çичĕ Сантăркка та пил çине килĕ-ха", – тесе те шухăшласа пăхнă, анчах та пуçарнă ĕçĕ çапла пĕр чапсăр сÿнсе ларма пултарассишĕн хытах пăшăрханнă. Çĕрĕпе куç хупманскер, шурăмпуç çутипе ăслăран та ăслă шухăш килнишĕн ачалла хĕпĕртенĕ.

"Сарă пуласси мĕн вăл, вăт эс хура пулса çурал та хура пулса пурăн, хĕрарăмсен чĕрисене йĕкĕлте, – тенĕ вăл хăйне хăй. – Сухан хуппи ак халь вĕрететĕп те çÿçе виç хут чÿхетĕп. Сап-сарă Сариван пултăм та!"

Çапла тунă та. Хăй вара çакăнтах пахча хыçĕнче пурăнакан Лисук евчĕ патне хăйне кăтартма васканă. Лешĕ Хурăнлăхран çитсен ывăннă енне ĕнер сăмакун черккине самаях пушатнă иккен, урăмсурăм уткаласа пахчаналла тухнăччĕ кăна вăл, ăна хирĕç Сариван уттипе темле арçын килнине асăрханă. Хăй чикан пек хуп-хура, çÿçĕ-пуçĕ вара – йĕтĕн пек сарă.

– Мĕкĕте, Мĕкĕте! Мана шуйттан тытать! – тесе кăшкăрса янă та Лисук, пÿрте кĕрсе чăмнă. Унтан Мĕкĕте ик кĕпçеллĕ пăшалпа хашкаса тухнă.

– Мĕн эс, Мĕкĕте, – ик аллине çÿлелле çĕкленĕ Сариван. – Сариван эпĕ, чăн Сариван!

– Тăрнаккай эс, Сариван мар, – тенĕ лешĕ пăшалне çĕрелле илсе. – Ман Лисукпа ĕмĕрĕпе çынна култарса пурăнатăр.

Çакăн хыççăн ялта Саривана Тăрнаккай тесе чĕнме пуçланă. Хитре те илемлĕ ят унран уйрăлнă... Тек вăл авланма та шутламан... Хусаххăнах кунпа çĕре ирттернĕ. Салхуллăрах çÿренĕ.

Пĕр кунхине ял уничинче пысăк çыхă йăтнă хĕрарăм курăнса кайнă. Пĕрремĕш çынна курсанах вăл çапла ыйтнă:

– Сирĕн ялта Сариван хăш урамра пурăнать-ши?

– Сариван, Сариван... – мăкăртатнă лешĕ. – Пурăнма пурăнатьха вăл. Кунтан инçех те мар... Анчах... Халĕ ăна Тăрнаккай тесе чĕнеççĕ.

– Пурпĕрех-иç. Тĕлне кăтартса ярăр-ха.

Ку вăл Хурăнлăхри Сантăркка пулнă. Ширанă арçын килĕ умне çитнĕ те хăюсăррăн шакканă. Лешĕ васкамасăр кăштăртатса тухнă. Сантăркка, сарă арçынна курма ĕмĕтленнĕскер, чикан пек хура арçынна курсан малтанах питĕ тĕлĕннĕ, вара, шăтарасла пăхса тăнăскер, хаш! сывланă та каланă:

– Хура пулсан та – Сариванах...

Вĕсем пĕрле пурăнма пуçланă. Халĕ те пурăнаççĕ, пĕр-пĕринчен уйрăлма пачах шухăшламаççĕ. "Манăн Сариван", – тет ăна Сантăркка çынсем умĕнче хытă-хытă ыталаса. Ял-йыш та Саривана каллех Сариван тесе чĕнме пуçлать.

**В. КОНСТАНТИНОВ.**

## Ăнлансам мана

Каçарсамччĕ мана, каçарсам,
Пултаратăн пулсан эс савсам,
Хăв ачаш сăмахна каласам,
Тĕлĕкре эс мана курăнсам,
Тунсăхри чĕрене ăнлансам,
Калаçсамччĕ манпа, калаçсам.

Чĕреме манăнне ан çунтар,
Пуçăма шухăшран манăçтар,
Тунсăхри чĕрене канăç пар,
Çулăмрах эс мана ан çунтар,
Эп кĕтетĕп сана, ăнлансам,
Юлашки сăмахна каласам.

**САЛАМПИ.**

## Сана савать пĕр пике

Çуралнă ял, кăвак тÿпе,
Пике нумай пирĕн ялта.
Пĕлĕт пит янкăр тÿпере,
Пурнăç аван пирĕн умра.

Каçпа тухан ĕшне хĕрне –
Утаççĕ мăшăрсем пĕрле.
Илемлĕ вăйă картинче
Ташлаç яшсем, юрлаç хĕрсем.

Чĕрем тулать таса юнпа,
Вĕçес килет çÿлтен çÿле.
Пурнăç аван кунран кунах,
Ĕçлес те савăнас килет.

Яш каччă, илт ман сĕнĕве:
Хĕрне суйла пит ĕçченне.
Сана савать пĕр сар пике,
Пĕрле пулма ăна чĕнсем.

Ĕмĕр иртет кунран кунах.
Эс çав хĕрпе мăшăрлансан
Пурнăçăр пулĕ аванах,
Ывăлпа хĕр парнелĕ вăл.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**

Якаткасси ялĕ.

## Маттур салтакшăн вилĕм çук

Маттур салтакшăн вилĕм çук –
Мухтавĕ ĕмĕр пурăнать.
Салтак сыхлать мĕн пур çĕре –
Çĕр-шыв ăна асра тытать.

Вăрçа кайсан вăл хăрамасть
Тискер, хăрушă тăшманран,
Пĕр утăм каялла чакмасть
Тăван çĕре юратнăран.

**Кирилл Чермаков,**
**Тойкилтĕ шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен.**

## Тăван килте

Чăваш юрри, сăвви, кĕвви –
Янра ялан кăмăл тулли.
Юрлар, анне. Юрлар, атте, –
Савнар паян тăван килте.

Кил-йыш тулли ачи-пăчи,
Ирччен янра вăййи-кулли.
Ан йĕр, анне. Киллен, атте, –
Савнар паян тăван килте.

Хуран кукли, какай шÿрпи –
Пултăр ялан сĕтел тулли.
Çиер, инке. Ĕçер, пичче, –
Савнар паян тăван килте.

Чăваш йăли, ĕçки-çики,
Тулли пичке – пыллă сăри.
Ташлар, инке. Ташлар, пичче,
Савнар паян тăван килте.

**Нина ИЗЕДЕРКИНА.**

## Савни, сар эс вырăнна

Куçусем, сан куçусем!
Писнĕ çĕмĕрт çырлисем.
Çурла уйăх куç харши –
Чуп тумасăр чăтăм-ши?
Апла тытса пăхăм-ши?

Савни, сар эс вырăнна.
Эрешленĕ тĕррине,
Ик çунатлă çĕррине
Çавăр та ман енелле
Сÿнтер вара çутăна.

Те халь пуçăм çаврăнать,
Те ман чунăм тапранать.
Тен ташласа ярас-ши?
Уйăх та вăтанать-ши?
Чĕречене карас-ши?

Ак çапла çав, ак çапла,
Савни, эсĕ манпала.
Никам кирлĕ мар пире.
Çÿре, уйăх, тÿпере,
Пĕрле халĕ ик чĕре.

**ŸРМЕК ВАÇЛИ.**

16 – 26. 11. 2012 ç.

## Ик чĕре

Юлашки çутине
Сапалатчĕ пĕччен
Тÿпере уйăхпи шуçăмччен.
Ик телейлĕ чĕре
Тĕл пулсан пĕр-пĕрне
Уйрăлма хал çитместчĕ ирччен.

Ак паян эс манран
Аякра-аякра,
Шухăшла çеç санпа эп ялан.
Анчах эс ăнлансам:
Пĕр-пĕрне юратсан
Юрату иксĕлмест нихăçан.

Юлашки çутине
Сапалать ав ирччен
Тÿпере уйăхпи пĕр-пĕччен.
Шухăшра пĕр-пĕрне
Тĕл пулаç ик чĕре,
Шухăшра уйрăлмаççĕ ирччен.

**ВЛАДИМИР.**

## Епле-ши чăтса?

Ах, шеремет вăрçă çулĕ
Чĕр нуша пулса.
Ах, шеремет халăх чунĕ
Мĕнле-ши чăтса?

Хĕрĕх сотка çĕр пулсассăн
Налукне тÿлен,
Хĕрĕх соткăшăнах эсĕ
Ашне те паран.

Хĕрĕх сотка вĕт-ха санăн –
Çăмарта паран,
Качакийĕ çук пулсан та
Ун сĕтне паран.

Пурăнма та хÿтĕ суккă –
Çĕр пÿртре пурнан,
Çулла вĕлтĕрен яшкийĕ
Ах, епле аван.

Чĕптĕм çу çисе курман та,
Пĕтĕмпех паран.
Укçа пирки шутламан та,
Вăл ăçтан пулать?

Хусахсен налукĕ пурччĕ
Майран тытакан.
Çийĕнче çи-пуçĕ çукчĕ,
Кантăрна акан.

Çăпатийĕ çĕтĕк-çатăк,
Пушăт хатĕрлен.
Лартнă саплăк çине саплăк,
Пурăнан хуллен.

Çын вилсессĕн пит нушаччĕ,
Мĕн тăхăнтартан?
Шăтăк алтма та çын çукчĕ,
Иккĕн çеç алтан.

Хĕрес тума йывăç çукчĕ,
Шалча çеç лартан.
Вылăх масарĕнчи пекчĕ
Вил тăприйĕ сан.

Хĕрĕх кунĕ те çитет-çке,
Мĕнпе асăнас?
Тахçантанпах çăнăхне те
Сан кункра курман.

Пуç çинче пыйти нумайччĕ,
Çи-пуç тулиех.
Мунча кĕрсен те пĕтместчĕ,
Вĕçĕм вăл ĕрчет.

Вăй питти çынсем çукрахчĕ –
Вата-вĕтĕсем.
Хĕрарăмсем çеç юлсаччĕ,
Çуккă арçынсем.

Лаша вырăнне кÿлĕннĕ
Тăлăх арăмсем,
Ашак вырăнне ĕçленĕ
Вăрçă ачисем.

Ах, шеремет этем чунĕ,
Чăтнă, тÿсмелле.
Хăв тĕллĕн утса кайăмăн
Масар çинелле.

Нихăçан асран тухмаççĕ
Çав нуша çулсем.
Çакна халăх, çук, манаймĕ
Вăхăт иртсен те.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**

Якаткасси ялĕ.

## Аваллăхăн сăваплă паллисем

Тăван кĕтес! Хĕвеллĕ çĕрĕм-шывăм!
Сире савса эп ÿсрĕм пĕчĕкрен.
Çуралнă ялăм! Улăхăм-çаранăм!
Сиртен хакли мĕн пур-ши тĕнчере?

Тахçан авал, ватă çынсем калаççĕ,
Ку тăрăхра кашлана вăрмансем.
Иртсен çулсем – ялсем ÿссе лараççĕ,
Çакăн çинчен çÿреçĕ халапсем.

Пуçланнă тет Шаптак Шаптак ятлă çынран,
Тойкилтĕ – Тойăн килĕ пулнăран,
Ижелкасси те Платкасси ик ят вара –
Ижей вырăспала Плат чăвашран.

Тата аваллăхăн сăваплă паллисем
Улăх-çаран, вăрман ячĕсенче:
Платон çаранĕ, Тăлни варĕ тенисем
Паян кунчен те халăх чĕлхинче.

Е Йÿçĕ варĕ, Вăрăм çот та Суккашни,
Вашкашни варĕ, Орсаккай та Шоркашни –
Ĕмĕрсем витĕр çак хитре ятсем
Тĕплĕ упраççĕ халăх кун-çулне.

Пулнă, чăнах та, мăн асаттесем
Ĕçчен, сăпайлă, сапăр чăвашсем.
Йăхран йăха тытса йăлисене
Пилленĕ пурăнма пире вĕсем.

Эппин упрасчĕ-ха хисеплесе
Чăвашăн ĕлĕкхи еткерлĕхне.
Янраччăр ĕмĕр халăх юррисем,
Чечекленсе çĕкленччĕр ялĕсем.

**Лариса СЕРГЕЕВА,**
**Тойкилтĕ шкулĕнче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен.**

## Каçарсам

*Асран кайми манăн ывăлăма.*

Ывăлăм, савнă ывăлăм, каçар,
Эп пĕлеймерĕм сана упрама.
Ывăлăм, манăн пирĕштиçĕм, каçар,
Эп пĕлеймерĕм сана сыхлама.

Тен, ывăлăм, манăн виçесĕр юрату
Кайма пулăшрĕ сана инçе çула?
Халь, ывăлăм, виçесĕр ырату
Чĕнет тухма мана инçе çула.

Халь тин – эс çук,
Илтессĕм çук сан сассуна,
Халь тин эс йăл кулассăн çук,
Илтессĕм çук «аннеçĕм» тенĕ сăмахна.

Асăмран тухмастăн эс ялан,
Куç умĕнчен каймастăн эсĕ нихăçан.
Çĕрле те, кăнтăрла та эс йĕрлен,
Ман утăмна утатăн эс хитрен.

Халь тин – эс çук,
Канăçлăхра вĕçетĕн пĕр пĕччен.
Халь тин эс йăл кулассăн çук,
Калассăн çук хăвăн «аннеçĕм» сăмахна.

Ыратмасть чĕрÿ сан,
Шутламастăн эс кун иртнине.
Хытса ларнă ăшă кăмăлу сан,
Манса кайнă иртнĕ кунсене.

**САЛАМПИ.**

## Хĕллехи кайăксем

Кайăксем – пирĕн туссем,
Пурăнаççĕ юнашар.
Чĕвĕл-чĕвĕл сассисем
Илĕртеççĕ такама.

Калаçаççĕ манпала:
Юрлар мар-и-ха пĕрле?
Курнăçатпăр кун каçа,
Манар мар: тулта хĕлле.

Хĕл сиввийĕ хăратать,
Çимĕç тени сахалрах.
Ачасем çине шанать
Ват çерçийĕ яланах.

Ванюк, Санюк, Варвари –
Тус-юлташлă ачасем
Айтăр сырăш тăвар-и?
Тутă пулччăр кайăксем.

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**

Якаткасси ялĕ.

Ачасен пуласлăхĕшĕн



# «Пурнăçăма шкулпа çыхăнтартăм»

Ĕçе юратакан пур çĕрте те ырăпа палăрни вăрттăнлăх мар. Çĕк тĕслĕхе эпĕ Ильинкăри вăтам шкулта тепĕр хут тĕл пултăм. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Владимир Корпусов – районти ăста водительсенчен пĕри. Ăна паллакансемпе ял çыннисем те, пĕрле ĕçлекенсем те, шкул ачисем те çакна хирĕçлемеççĕх.

Владимир Николаевич асăннă шкулта 31-мĕш вĕренӳ çулĕ ĕçлет. Çак хушăра шкул пурнăçне чунĕпе парăннă арçын вĕренӳ учрежденийĕнче тиев турттармалли автомашинăпа та ĕçленĕ. Анчах водитель стажĕн ытларах пайне автобус рулĕ умĕнче ирттернĕ.

– Пирĕн шкула вĕренме çӳрекенсене эпĕ кулленех 7 ялтан илсе килсе уроксем хыççăн килĕсене леçетĕп. Кунсăр пуçне ачасен пуласлăхĕшĕн тата вĕсен сывă пурнăç йĕркишĕн тăрăшса ăмăртусене, Муркашри «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне илсе çӳретĕп. Кашни рейсрах кăмăллă ачасен йăлт куллине курсан чун хĕпĕртет. Хам та пурнăç çулĕ çине çак шкултан тухрăм. Вичĕ ачам та кунта вĕренсех хăйсен пурнăç çулĕсене тупрĕç, – сăмах шыраса кĕсьене кĕмест водитель, çав хушăрах хăйĕн ачисем çемье çавăрма ĕлкĕрнине те палăртса.

Юратнă ĕç, çемьери килĕшӳ, ачасен ăнăçлă çул-йĕрĕ – çакă мар-и-ха пирĕнтен кашнин телейĕ! В. Корпусов водителе унăн телейĕшĕн ырăпа ăмсантăм çеç.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Спорт хыпарĕсем

## Парламент кубокĕсене çĕнсе илчĕç

Иртнĕ эрнере, январĕн 18–19-мĕшĕсенче, районти Çамрăксен парламенчĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕсем иртнĕ. Пĕрремĕш кунне хĕрсен командисем, иккĕмĕш кунне яшсен командисем вăй виçнĕ.

Хĕрсен командисенчен Ярапайкассинчи команда вăйлăраххи тӳрех палăрнă. Çавăнпах ĕнтĕ вĕсем вăйăра çĕнтерӳçĕ пуласси никама та иккĕлентермен. Иккĕмĕш вырăна Муркашри вăтам шкулти хĕрсен команди, виççĕмĕш вырăна Нискассинчи вăтам шкулти хĕрсен команди тухнă.

Яшсенчен кăçал Москакасси шкулĕн вĕренекенĕсем палăрнă – пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсенче – Орининсемпе Нискассисем.

**Хамăр инф.**

## Ку хутĕнче Элĕксене çĕнтерчĕç

Январĕн 12-мĕшĕнче Тивĕш ялĕнче шахматла выляма юратакансем пухăнчĕç. Муркаш тата Элĕк районĕсенчи шахматистсем паллă педагог ветеранăн Л. Краснован кубокне çĕнсе илессишĕн вăй виçрĕç.

Командăсенче 8-шар шахматист пулчĕ. Пĕлтĕр çак тĕл пулура Элĕксем çиреппĕнех çĕнтернĕччĕ. Ку хутĕнче вара Муркашсем ответлăрах пулни палăрчĕ: 39,5 балл пухса Элĕксене парăнтарчĕç (24,5 балл). Муркаш районĕн командинче В. Верендеев, А. Жданов, Ю. Шадов, И. Кабуркин, П. Пушкарев, В. Афанасьев, Л. Краснов тата Н. Григорьев пулчĕç. В. Афанасьевпа П. Пушкарев вăййсем уйрăмах ăнăçлă ирттерчĕç.

Вăййсене хутшăнакансем Л. Краснов ăмăртăва питĕ лайăх йĕркелеленине палăртрĕç, кун пек тĕл пулусем малашне татах та ирттерессе шаннине каларĕç.

**И. КАБУРКИН.**

# Çӳп-çапăн та хакĕ пур

2013 çул – Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăк

«Пуçтарнă çĕрте мар, çӳпĕлемен вырăнта таса», – теççĕ халăхра. Ял тăрăхĕсен территорийĕсем тирпейлĕ тата хăтлă пуласси çынсен культура шайĕнчен те нумай килет çав. Ялсенче пурăнакансем ăпăр-тапăр унта та кунта пăрахнипе акса-лартма юрăхлă çĕрсемех шар курасçĕ вĕт. Çакнашкал çитменлĕхсемпе Раççей Ял хуçалăх надзорĕн республикăри управленийĕн ĕçченĕсем юлашки çулсенче уйрăмах вирлĕн кĕрешеççĕ. Усси пур, çапах та ĕçлемелли те тем чухлех.

Тĕрĕссипе, саккунсем тăрăх, çӳп-çапа ятарлă вырăна кайса тăкассине вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен йĕркелесе тăмалла. Сăмах май, Чăваш Республикинче ăпăр-тапăр пăрахмалли санкциленĕ 34 вырăн шутланать. Вĕсене хула-район администрацийĕсем тата ытти тивĕçлĕ органсем пăхса тăраççĕ. Анчах йăлари хытă каяша ятарлă вырăна çитерес ĕçе пур çĕрте те лайăх йĕркеленĕ теме васкар мар. Пур, паллах, аван йĕркеленисем те е лару-тăрăва лайăхлатма тăрăшакансем.

Патшалăх çĕр надзорĕн пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Нина Воронова калаçа панă тăрăх Елчĕк районĕнче çак тĕлĕшпе япăх мар ĕçлеççĕ. Лайăх енчен урăх тăрăха палăртма та иккĕленмелле. Пур çĕрте те тенĕ пек инспекторсене хивре калаçу пуçарма сăлтав тупăнать. Пурте асăрхаттарнине тимлесен тем пекехчĕ те çав. Çук вĕт, управлени ĕçченĕсем пĕр тĕлех темиçе те çула тухаççĕ. Патăрьел районĕнчи Турхан ял тăрăхне инспекторсем пĕр çухалса çӳремесĕр çитме пултараççĕ-тĕр. Ăра, çулталăк тăршшĕпе миçе хутчен кайса килме тивменха та. 2012 çул пуçламăшĕнчех управлени ĕçченĕсем Турхан ялĕнчен инçех мар ăпăр-тапăр купине асăрханă. 0,53 гектар çинче мĕн кăна куç тĕлне пулман пуль. Тĕрĕссипе ку тавралăх 2013 çулта улшăнасса инспекторсем иккĕленеççĕ те. Ăра, санкциленмен çӳп-çап купине пуçтарма хушса икĕ хут предписани парсан та «лав вырăнтан та хускалман». Пĕрремĕш хутĕнче ял тăрăхĕн администрацине лаптăка тасатма çу уйăхĕн 25-мĕшĕччен вăхăт панă. Шел, вăй çитереймен асăрхаттарăва пурнăçлама. Çакăншăн Патăрьел район миравай судйи юридици вăйĕнчи çынна 10 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕре пуçтарса тирпейлеме 5 уйăх уйăрнă. Шел те, ку хутĕнче те инспекторсене тимлемен унта. Каллех административлă йĕркепе айăплама тивнĕ.

Шупашкар районĕнчи Янăш ял тăрăхĕн пуçлăхне те йышăнăва вăхăтра пурнăçламаншăн административлă явап тыттармалла пулса тухнă: ăна та ăпăр-тапăр купинчен хăтăлманшăн.

Пĕтĕмпе 2012 çулта асăннă пай специалисчĕсем ял тăрăхĕсем тĕлĕшĕнче 72 тĕрĕслев йĕркеленĕ. Элĕк районĕнче вара пĕр хуçалăха тĕрĕслеме кайнă та типтерсĕрлĕх купи тĕлне пулнă, инспекторсем кăна çапла хăварма пултарайман, паллах, – тĕпчев ирттернĕ. Мĕн тетĕр, ял тăрăхĕн администрацийĕн пуçлăхне явап тыттарма тивнĕ.

Кунашкал йĕркесĕрлĕхсем район прокурорĕсене те вĕчĕрхентереççĕ. Вĕсем управлени ĕçченĕсемпе час-часах пĕрлехи тĕрĕслевсене чĕнеççĕ. Çавна май пĕлтĕр 5 ял тăрăхĕн администрацине, должноçри 34 çынна яваплăх пирки аса илтернĕ. Сăмахран, Канаш районĕнче – 7, Вăрмар районĕнче – 5, Вăрнар районĕнче – 4 пуçлăха.

Палăртмалла, пĕлтĕр 116,1 пин гектара пăхса çавăрнă май саккунсене пăснă 29 тĕслĕхе тăрă шыв çине кăларнă.

Инспекторсен асăрхаттарăвĕсене пачах шута илмеççĕ теме çук. Пĕлтĕр, калăпăр, çӳп-çап тăкнă 27 вырăна тасатнă. Çапах саккунлă предписанисене уяманни те тĕл пулать çав. Управлени кун пек чух административлă ĕçсене суд органĕсене çитерет. Икĕ тĕслĕхе пирки маларах сыртăмăр, Çĕрпӳ районĕнче те кунашкал йĕркесĕрлĕхпе кĕрешме тивет. Кунта Вăрманкас Чурачăк ял тăрăхĕнче пулăхлă çĕре сая яраççĕ.

Пĕтĕмлетсе çакна каласа хăварас килет. Чăннипе çӳп-çап кăписем асăннинчен темиçе хут та нумайрах. Инспекторсем пур çĕре те çитеймен – çавă çеç. Анчах кăçала палăртнă тĕрĕслевсен шучĕ те пĕчĕк мар. Эппин, паянлыран сирĕн тăрăхăлла та çитĕç. Çӳп-çапшăнах пите хĕретес марччĕ те çав... «Çынра йăлтах – чун та, сăн та – илемлĕ пулмалла», – теççĕ халăхра. Хитре те илемлĕ çуртсемлĕ ялсем тавра вара ырашулăллă уйсем кашлачăр.

**Н. ВАСИЛЬЕВА,**
**Раççейри ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ.**

Спорт

## Оринина – волейболла выляма

**Январĕн 26-мĕшĕнче «Оринино» хуçалăхăн кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусем иртеççĕ. Орининсем районти арçынсен волейбол командисене (9 çын), шашка (1 арçын) тата шахмат (1 арçын) вăййисен ăмăртăвĕсене хутшăнма йыхравлаççĕ. Ăмăртусем Орининти вăтам шкулăн спорт залĕнче 10 сехетре пуçланаççĕ.**

## Хĕрарăмсен ăмăртăвĕ

**Февралĕн 2-мĕшĕнче районти хĕрарăмсен волейбол командисем хушшинче ăмăрту иртет. Пур предприятипе организаци, учрежденипе ял тăрăхĕсен командисене те ăмăртăва чĕнеççĕ. Ăмăрту «Сывлăх» ФСК-ра 10 сехетре пуçланать.**

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

# «Вест-Лайнер» «Юнгăна» парăнтарчĕ

«Хоккей матчĕ интереслĕ те «чĕрĕ» иртрĕ. Кун пеккине эпир Муркашра сайра хутра çеç сăнама пултаратпăр», – çапла пулчĕ Муркашсен шухăшĕ «Сывлăх» ФСК пăрĕ çинче иртнĕ шăмат кун «Юнга» тата «Вест-Лайнер» хоккей клубĕсен матчĕ хыççăн.

Командăсем хушшинчи вăйă питĕ хĕрӳ пулчĕ. Пĕтĕм Раççейри иккĕмĕш фестивале лекессишĕн тăрăшаççĕ-çке-ха вĕсем. «Любитель 40+» дивизионта вăй виçекенсем – чăнах та спорта парăннă çынсемех. Сăмах май командăсенче пирĕн районта лайăх пĕлекен В. Димитриева – республикăри патшалăх тĕп инспектор инженерне тата Муркаш районĕнчи нотариуса П. Шлаева та курма май пулчĕ. Владимир Павлович Муркаша «Юнга» клубшăн выляма çитнĕ, Павел Иванович вара «Вест-Лайнершăн» вылярĕ. Районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн директорĕ А. Куликов вăййсем пуçланиччен савăнăçлă лару-тăрура П. Шлаева ятарлă Тав çырăвĕ парса чысларĕ: Муркаш районĕнчи ачапăча спортне аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн.




Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев вăййсене хаваспах сăнассине пĕлтересе хоккей клубĕсене хĕрӳ те интереслĕ вăйă ирттерме вăйхал сунчĕ. Хоккеистсене вĕсем ачасемпе çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулнине палăртса тав сăмахĕ каларĕ. Ăмăртăвăн тĕп судйи, Чăваш Енри Çĕрлехи хоккей лигин ертӳçи Николай Пороскун шайбăна пĕрремĕш хут пăр çине пăрахма Р. Тимофеева шанса пачĕ. Хыççăн вăйă пуçланчĕ...

Хоккей вăййине сăнама чăнах та питĕ кăмăллă пулчĕ. Муркашсем гол кĕртсен уйрăмах хыттăн «урра» тесе кăшкăрни, выляканисене вăхăтлăх вăйăран хăтарни – пĕтĕмпех пулчĕ вăйăра. Темĕнле тăрăшса вылясан та, шел пулин те, «Юнга» Шупашкарсене 3:6 шутпа выляса ячĕ. Анчах çакăнпа кăмăл пăсăлмалла мар: вĕсен малашнехи вăйăсенче ăнăçусем ытларах пуласса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ача-пăча сачĕсенче

# Çут çанталăка юратма вĕренеççĕ



Шурă хĕл кашни кунах пире хăйĕн кăмăлне кăтартать: е кашни кун юр çăвать, е сивĕ те çиллĕ кунсем тăраççĕ. Çак сивĕ кунсенче этеме кăна мар, чĕр чунсене те, кайăксене те питĕ йывăр. Çавăнпа та эпир Мăн Сĕнтĕрти «Мечта» ача-пăча садне çӳрекен аслă ушкăнри ачасем хушшинче «Кайăксене пулăшар» конкурс йĕркелерĕмĕр.

Ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле ачасем кайăксем валли темĕн тĕрлĕ сырăш туса хатĕрлерĕç – Мăн Сĕнтĕрте ал ăстисем нумай иккен. Хăтлă та хӳтĕ тытакан сырăшсене ачасемпе пĕрле ача-пăча сачĕн картишĕнче ӳсекен йывăççем çине çакрăмăр. Кайăксене апат патăмăр. Халĕ çак ĕçе тăтăшах пурнăçлатпăр.

Тавах сире, пирĕн ача-пăча садне çӳрекенсен ашшĕ-амăшĕсене, ачасене çут çанталăка, кайăксене юратма вĕрентнĕшĕн.

**В. ПЕТУХОВА, воспитатель.**

Полици хроникинчен 12+

## «Кукăр алăна» тупса палăртнă

Ку ĕç Вăрманкас Хачăк ялĕнче пулса иртнĕ. Çăмăл автомашина салонĕнчи хĕр арăм курткин кĕсйинчен 8 пин тенкĕ укçа, пĕр пачка пирус тата кĕсье телефонне кăларса илнĕ. Çакна Москакассинчи шкулта вĕренекен хĕр ача тунă-мĕн. Ирхи пилĕк сехетре машинăра мĕн туса ларнă-ши хĕр? Ашшĕ-амăшĕ нивушлĕ вăл ăçта пулнипе интересленмен? Ыйтăвĕ чылай паллах. Пуçарнă уголовлă ĕç тухса тăракан пур ыйтăва та татса парĕ.

## Амăшĕ мĕнпе «кӳрентернĕ-ши»?

Утмăл урлă каçнă амăшĕ ывăлне темĕнпе «кӳрентернĕ» ĕнтĕ. Анчах ăна хытах лекнĕ: ывăлĕ хĕненипе унăн пулăшу ыйтма больницăнах çитме тивнĕ. Ĕçе пакунлисем уçăмлатса парĕç. Вăтăр пилĕке çывхаракан арçыннăн амăшĕ çине алă çĕкленĕшĕн ответ тытмалла пулатех.

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

ПРОДАЕТСЯ ДВУХКОМНАТНАЯ КВАРТИРА ПО УЛ. ПАРКОВАЯ, С. МОРГАУШИ. ТЕЛ.: 8-927-668-96-75.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА Brusbox от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Закажите зимой окна в рассрочку, установим весной. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 2-10.

Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Технониколь» – 530 руб.; гипсокартон – 190 руб.; ОСП 9 мм (1,25х2,50) – 555 руб.; профнастил оцинк. 2 м – 400 руб., (167 руб. м²), профнастил крашеный 2 м – 480 руб., (209 руб. м²); сухие смеси, цемент – 180 руб.; сайдинг; двери. Тел.: 8-903-322-59-69, 8-961-348-66-36. 2-10.

Тав тăватпăр

Актай ялĕнче пурăннă Борис Викторович Соколова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйха пĕрле пайланăшăн тăван-хурăнташсене, пускилсене, ял-йыша, «Ударник» хуçалăх коллективне тата поварсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Соколовсен çемйи.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:260301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Спиридонов Алексей Петрович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. Емельянова, д. 32.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:260301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, земельные участки расположены в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:260103, площадью 3,93 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:220701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Кириллов Николай Дмитриевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Озерная, д. 20. Кириллова Любовь Феоктистовна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Озерная, д. 20.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:220701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:220501.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

Прогноз погоды

| | среда 23 января | | | | четверг 24 января | | | | пятница 25 января | | | | суббота 26 января | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -16 | -15 | -15 | -15 | -17 | -17 | -16 | -18 | -21 | -21 | -20 | -21 | -24 | -25 | -23 | -25 |
| Давление мм | 739 | 739 | 739 | 738 | 737 | 737 | 739 | 740 | 742 | 742 | 743 | 745 | 745 | 746 | 746 | 746 |
| Влажность % | 80 | 87 | 84 | 85 | 85 | 84 | 81 | 89 | 81 | 82 | 74 | 82 | 79 | 79 | 75 | 80 |
| Ветер м/сек | 5 | 6 | 3 | 3 | 2 | 4 | 4 | 5 | 3 | 5 | 3 | 4 | 2 | 1 | 2 | 4 |
| | З | Ю-З | Ю-З | З | Ю-З | З | З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | С | С-З |
| Солнце восход / заход | | 09:01 | 17:07 | | | 09:00 | 17:09 | | | 08:58 | 17:12 | | | 08:57 | 17:14 | |
| Луна восход / заход | | 13:50 | 06:04 | | | 14:44 | 06:50 | | | 15:45 | 07:27 | | | 16:52 | 07:58 | |

Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL HD. Триколор – 7000 руб. Телекарта – 3000 руб. Карты «Кинозал» со скидкой – 250 руб. Тел.: 8-906-385-29-30. 10-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.

Пĕлтерӳсем. Объявления

ООО «ВИКТОРИЯ»

* Ведение бухгалтерского учета, составление отчетности, декларации 3НДФЛ.

* Представительство в судах всех инстанций.

* Составление договоров, претензий, исковых заявлений.

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков.

* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.

* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП, внесение изменений.

* Кадровое делопроизводство.

* Бизнес-консультации.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119. Тел.: 62-4-43.; г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.

E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru

* * *

Утă, улăм, урпа сутатпăр.
Тел.: 8-960-309-69-46, 8-960-302-60-47.

* * *

Март уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура тĕслĕ тынашка сутатпăр. Тел.: 8-906-134-93-35.

* * *

Сниму квартиру в с. Моргауши на длительный срок. Чистоту и порядок гарантирую. Тел.: 8-937-377-26-77.

* * *

Ултă хут пăруланă хĕрлĕ ĕне сутатăп, апрельте пăрумалла. Тел.: 8-965-680-94-97.

* * *

Отаркка ялĕнче пурăнмалли кирпĕч çурт сутатпăр. Хушма хуралтăсем те йăлтах кирпĕчрен. Килтех çăл пур. Тел.: 8-937-370-64-97.

* * *

Продаем окна деревянные любого вида и на заказ, двери деревянные (массив).
Тел.: 8-906-388-66-04, 8-905-341-02-86. 4-15.

* * *

В объявлении собственника земельной доли, о выделении земельного участка в счет земельной доли, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 9 апреля 2011 года в №№ 25-26 (7879-7880), стр. 4, во 2 колонке, допущена опечатка. Вместо «Хапкина Ираида Варсонофьевна» следует читать «Хапкина Ираида Варсонофеевна».

* * *

Продаю кроликов. Тел.: 8-905-027-24-26.

* * *

Май уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатăп.
Тел.: 8-906-387-23-40.

* * *

Продаются: корова, родословная хорошая; теленок; сено в рулонах. Срочно. Тел.: 8-927-860-30-47, 8-919-675-36-28, 8-906-384-18-66.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 2-2.

* * *

Москакасси ялĕнче икĕ çĕр участокĕ (39 сот.) сутатăп. Пĕринче пурăнмалли çуртпа хуралтăсем пур. М-7 трасса хĕрринче. Ыйтса пĕлмелли телефон: 8-909-305-73-21. Валентина.

Бурение колодцев, колодезные кольца. Доставка, установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 4-10.

Срубы – любой размер. Пиломатериалы: обрезные – 5800 руб. Дрова 1000 руб, 1 м³. Доставка бесплатно. Тел.: 8-937-955-11-00. 4-10.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060403:266, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул.Ленина, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 837 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, , с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99,62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:120701:234, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 2275 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, , с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99,62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:160306:467, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с.Моргауши, для установки временных сооружений, площадью 23 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, , с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99,62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:091101:174, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:091101, для возведения хозяйственных построек, площадью 26 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, , с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99,62-7-47.

Муркашри тĕп больница коллективĕ кунта врач-психиатрта ĕçлекен Т.А. Рыбниковăн

**АШШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки пĕтĕм чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 22.01.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4780.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.